## Вăрçă йÿççине пылаклатма кирлех-ши? ● 5 стр.


ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

3(821) №, 2014, кăрлач, 25

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



**Студент стипендийĕ мĕн тума çитет?** 2 стр.

**Шупашкара… хăнкăла тапăннă.** 3 стр.

**Асăрханăр! Шашкă вырăнне сăвăр е кролик тирĕнчен çĕленĕ кĕрĕк тыттарса яма пултараççĕ…** 4 стр.

**Вылььăха та ачашлăх кирлĕ.** 8 стр.

**Чăн-чăн юрату вăхăта парăнмасть.** 9 стр.

**Алла тытрăм балалайка.** 10 стр.

**Çĕр-шыв ертÿçи пулма… хăрушă.** 11 стр.

**Кăшарни сивви чуна сиплет…** 12 стр.




2 стр.

# Чăваш 46 çамрăкĕ РФ Президенчĕн стипендине тивĕçнĕ

**Пултаруллă та яваплă, тăрăшуллă та мал ĕмĕтлĕ çамрăксем – çĕр-шыв пуласлăхĕ. Телее, ăсĕ-тăнĕпе, çаврăнăçулăхĕпе савăнтаракан маттур яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç сахал мар чăвашра. Вĕсем малашлăха çул хывас тĕллевпе мĕн ачаранпах малалла ăнтăлаççĕ, çавна кура çитĕнÿсем те нумай кĕттермеççĕ. Чăваш Енре 2004 çултанпа кашни çулах 1 пин çамрăк ЧР Пуçлăхĕн стипендине илет. Уйăхсерен тивĕçекенскер кăçал 1830 тенкĕпе танлашрĕ. Стипендиатсен 60% – вĕренекен çамрăк. «Вĕренÿ» наци проекчĕ шучĕпе 2006-2013 çулсенче Чăваш Ен 506 çамрăкĕ Раççей Президенчĕн премине тивĕçнĕ. Кăçал пирĕн республикăран 46 çынна, вăл шутра 8-шне – 60-шар пин, 38-шне – 30-шар пин тенкĕ, çапла хавхалантарнă. Пултаруллă çамрăксенчен пĕринпе, Шупашкарти электромеханика колледжĕн 5-мĕш курс студенчĕпе, Станислав Владимировпа тĕл пултăмăр.**

Красноармейски районĕнчи Шупуçри тулли мар вăтам пĕлÿ паракан шкултан вĕренсе тухнă хыççăн çул тытнă вăл кунта. Ачаранах тĕрлĕ электрохатĕрпе аппаланма юратаканскер техник профессине суйланă. «Мĕн пĕчĕкренех «Çамрăк электрик» конструкторпа пуçа çĕмĕреттĕм, çав тери кăсăклăччĕ ку маншăн. Çавăнтанах юрăхсăра тухнă япалана та иккĕмĕш пурнăç парнелеме хăнăхрăм», – чăвашла илемлĕ те таса сăмахлать сăпайлă яш. Кашни ĕçе тĕрĕс-тĕкел те тирпейлĕн пурнăçлама хăнăхни унăн çыпăçуллă калаçăвĕнчен те палăрать.

Вĕренес туртăм Стаса яланах çĕнĕлĕх шырама хистенĕ. Республикăра професси ăсталăхĕн олимпиадинче çĕнтернĕскер Раççейри тупăшура та палăрнă – 20 ытла çамрăк хушшинче 3-мĕш вырăна тухнă. 30 пин тенкĕ премипе йĕкĕт ноутбук туяннă. Кăçал диплом илсен техник пĕлĕвне татах та тарăнлатас тĕллевпе аслă шкула вĕренме кĕме ĕмĕтленет. «Лаборатори ĕçĕсене ирттерме те, урока ертсе пыма та шанатăп ăна. Вăл ăслăлăх-практика тĕрлĕ конференцине тăтăшах хутшăнать. Тавра курăмĕ анлă, тăрăшуллă та яваплă вĕренекен», – палăртать яша олимпиадăна хатĕрленĕ педагогсенчен пĕри Андрей Захаров.

**Алина ИЗМАН.**

*Ылтăн çути шăнтать,*
*хĕвел çути ăшăтать.*

**Каларăш.**

## ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 25.01 | - 23 | - 27 | [redacted] |
| 26.01 | - 25 | - 26 | [redacted] |
| 27.01 | - 21 | - 27 | [redacted] |
| 28.01 | - 25 | - 28 | [redacted] |
| 29.01 | - 28 | - 30 | [redacted] |
| 30.01 | - 30 | - 31 | [redacted] |
| 31.01 | - 24 | - 26 | [redacted] |

ПИЧЕТ КУНĔ

# Чăнлăха пытарма юрамасть

**Уявра ĕçтешсемпе пĕрле савăнни асра юлать. Кăçал та Раççей тата Чăваш Пичечĕн кунĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрне пуçтарăнтăмăр. Юлташсемпе тĕл пулса калаçниех кăмăла çĕклет. Çакăнти куравра массăллă информаци хатĕрĕсенче, издательствăсемпе телекоммуникаци предприятийĕсенче вăй хуракансем хăйсен ĕçне туллин кăтартасси йăлана кĕнĕ. Чăнах, мăнаçланмалли пур пирĕн! Экспозицисене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ырларĕ. Чăваш наци телекуравĕн стенчĕ патĕнче Михаил Васильевич калем ăстисене уяв ячĕпе тӳрĕ эфирта саламларĕ. Çакăнтах хаçатсен çĕнĕ номерĕсене валеçрĕç, кĕнекесемпе паллаштарчĕç, цифра телекуравĕ çинчен каласа кăтартрĕç. Икĕ сехет хушшинче Олимп çулăмĕне 150 çын сăн ӳкерĕнме ĕлкĕрни те – хăйне евĕрлĕ пулăм.**


• «ХЫПАР» ОПЕРАТОРНЕ ЛИДИЯ ШУМОВĂНА – ХИСЕП ХУЧĔ.


• АЛЬБИНА ВОЛКОВА ОПЕРАТОР ТА ХИСЕП ХУТНЕ ТИВĔÇРĔ.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пичет тытăмĕнче тăрăшакансене ĕçе, тăван тăрăха чунран юратнăшăн, сывă пурнăç йĕркине сарма пулăшнăшăн тав турĕ. Пĕлтĕр Чăваш Республики спорт регионĕ ята тивĕçнине, çакăншăн наци премине илнине тата Шупашкар Раççейри хăтлă хуласен йышне кĕнине палăртрĕ ертӳçĕ. «Çакăнта сирĕн тӳпе те пур. Эсир лару-тăрăва тĕрĕс тата витĕмлĕ çутатнă», – терĕ Михаил Васильевич. Журналистсене малашне те таса чунпа ĕçлеме сунчĕ вăл.

ЧР информаци политикин министрĕ Валентина Андреева 2013 çулхи кăтартусемпе паллаштарчĕ. Пĕлтĕрхи çул МИХ ĕçченĕсемшĕн ăнăçлă пулнине çирĕплетрĕ вăл. Социаллă 41 проект пурнăçа кĕнĕ. Чăваш Енри республика, район, хула 10 хаçачĕ «Прессăн ылтăн фончĕ» палла тивĕçнĕ. Валентина Владимировна çавнашкалах раштавра «Тăван радио» эфира тухни, «Хыпар» Издательство çурчĕн никĕсĕ çинче медиахолдинг йĕркелени тавра калаçрĕ. «Эсир пурте вулакансен, куракансен, итлекенсен шухăшлавне витĕм кӳме пултаратăр. Кулленхи пурнăçăн тӳнтер енне кăтартма хăрамастăр. Çав вăхăтрах хăвăр шухăша палăртса çынсене тĕрĕс çул суйлама пулăшатăр», – сăмаха тăсрĕ министр. Журналистсене ĕçе парăннăшăн тав тунă май телей, çирĕп сывлăх, çитĕнӳ сунчĕ вăл.

Уява пухăннисене çавăн пекех РФ Патшалăх Думин депутачĕ Анатолий Аксаков, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ Олег Мешков тата ыттисем саламларĕç. Артистсем хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарчĕç. Чи пултаруллисем патшалăх наградисене, Хисеп хучĕсене, дипломсене тивĕçрĕç. Вĕсен хушшинче ĕçтешĕмĕрсем те пур. Лидия Шумова калăпласа тата Альбина Волкова оператора РФ Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хучĕпе чысларĕç. «Хыпар» хаçат корреспонденчĕ Юрий Михайлов Леонид Ильин ячĕллĕ премие çĕнсе илчĕ. «Çамрăксен хаçачĕ» редакторне Дмитрий Моисеева ЧР Патшалăх Канашĕн Тав çырăвĕпе хавхалантарчĕç. Чун-чĕререн саламлатпăр, çĕнĕ çитĕнӳсем сунатпăр.

**Мария РОМАНСКАЯ.**


• Л.ИЛЬИН ПРЕМИЙĔН ÇĔНĔ ЛАУРЕАЧĔ – ЮРИЙ МИХАЙЛОВ /СУЛАХАЙРИ/.


• ДМИТРИЙ МОИСЕЕВА – ЧР ПАТШАЛĂХ КАНАШĔН ТАВ ÇЫРĂВĔ.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕксем.

ЫЙТĂМ

# Шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ...

**Çапла, укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрех пулсан та, сесси вăхăтĕнче преподавательсем лайăх кăна силлесен те студент çулĕсем – чи асра юлаканнисем. Хавасла та вĕсем, шухă та. Шӳт валли те вырăн нумай унта /КВН ушкăнĕсем ахальтен çуралман-тăр…/ Çапах та паянхи ăру мĕнле сывлăшпа сывлани пирĕншĕн питĕ кăсăклă. Хаксем ĕрĕхсе кайнă кĕсре пек вĕçсе хăпарнă вăхăтра стипендипе мĕнле усă кураççĕ-ши вĕсем? Ыйту пушă вырăнта çуралман. Пĕр енчен – вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракан çамрăксене тивĕçекенскер, ним тума та çитмест пек туйăнать. Анчах паянхи студентсем ĕнерхисенчен пачах уйрăлса тăраççĕ. Укçаллă "халăх" вĕсем. Чăнах-чăнах. Пĕлтĕр çулла пирĕн редакцие аслă шкултан тин кăна вĕренсе тухса алла диплом илнĕ пике ĕçе вырнаçнăччĕ. Пĕрремĕш шалу /6 пине яхăн/ илнĕскерĕн кăмăлĕ пăсăлчĕ. "Студент чухне те манăн кĕсьере укçа ытларахчĕ – стипенди 10 пин тенкĕ патнелле илеттĕм", – макăрас патнех çитрĕ хăйхискер. Ĕçе пикеннĕ малтанхи вăхăтра студент çулĕсенче пухса пынă укçапа сыпăнтаркаласа пурăнчĕ. Пур пĕр чăтса çитерейменрĕ, шалу тивĕçтерменнипех ĕçрен пăрахса кайрĕ…**

**Вĕренекен çамрăксене çак ыйтупах чăрмантарма тĕв турăмăр: мĕн тума çитет стипенди?**




**Стас ВЛАДИМИРОВ, Шупашкарти электромеханика колледжĕн студенчĕ:**

– 900 тенкĕ ытларах стипенди илетĕп /ăна та пурне те памаççĕ/. Çавăн пекех сахал тупăшлисен социаллă стипендийĕпе – 645 тенкĕ – пулăшаççĕ. Эпĕ аппа патĕнче пурăнатăп, хваттер тара илсе укçа пĕтерместĕп. Стипенди яла кайса килме, апат çиме тăкакланать. Анне май çитнĕ таран пулăшать. Çулла Мускавра практикăра пулнăччĕ, унта та "кĕмĕл" ĕçлесе илтĕм.

**Денис ВАХОВ, Денис ИГНАТЬЕВ, Шупашкарти электромеханика колледжĕн 1-мĕш курс студенчĕсем:**

– Эпир хальлĕхе уйăхсерен 480 тенкĕ илсе тăратпăр. Çак укçана тăкакламан – стипендие ятарласа пуçтарса пыратпăр. Куллен кирлĕ хатĕр-хĕтĕре çывăх çынсем туянса параççĕ. Çуллахи каникулсенче ĕçе вырнаçасшăн. Çавна май енчĕк тата хулăнланĕ. Кайран хамăра ятăн автомашина туянăпăр. Ун чухне çав транспортпа тĕнче курса çӳреме те юрать.

**Кристина ДМИТРИЕВА, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн 3-мĕш курс студенчĕ:**

– Эпĕ – çемьеллĕ. Хальлĕхе упăшкапа уйрăм пурăнатпăр: эпĕ – хулара, вăл – ялта. Пĕр-пĕриншĕн тунсăхлатпăр паллах. Тепĕр тесен, пушă кирек хăш самантра Шупашкар районне тухса вĕçтерме пулать. Упăшка ĕçлет, çавăнпах хулана куçса килесшĕн мар. Мана çывăх çынсем сумка тулли апат-çимĕç тултарса парса яраççĕ. Аш-пăш та, пахча çимĕç те, кукăль-çăмах та чикеççĕ унта. Студента пурте укçа-тенкĕ енчен те пулăшма тăрăшаççĕ, çавăнпах алла кĕрекен 1400 тенкĕ стипендипе чиперех пурăнатăп пулса тухать. Çак укçа троллейбуспа çӳремешкĕн уйăхлăх билет /250 тенкĕ/ туянма, киле кайса килме /пĕр енне – 45 тенкĕ/, çăкăр, супăнь-порошок туянма çитет.

**Алина ЧЕРНОВА, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн 5-мĕш курс студенчĕ:**

– Халĕ шăпах "5" паллăлăх экзамен тытса тухрăм. Лайăх вĕренсе пынăшăн мана 2100 тенкĕ стипенди параççĕ. Унсăр пуçне мероприятисене хастар хутшăннăшăн, волонтерсен йышне кĕнĕшĕн аслă шкул 6 пин те 500 тенкĕ хушса тӳлет. Пĕлтĕр çулла Хура тинĕс хĕрринче канмашкăн путевка та тивĕçнĕччĕ мана. Çав укçана туй тума пуçтарса пыратăп. Алла диплом илсен савнă çынпа çемье çавăрасшăн. Çакăн пирки иксĕмĕр тахçантанпах ĕмĕтленетпĕр.

Деканатра ĕçлетĕп. Çакăншăн тата 5 пин те 800 тенкĕ кĕсьене кĕрет. Ăна перекетлĕ тытма тăрăшатăп.

**Алевтина КУПРИЯНОВА, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн 4-мĕш курс студентки:**

– Эпĕ социаллă стипенди илетĕп. Вăл 2700 тенкĕпе танлашать. Паллах, нимĕн тума та çитмест. Юрать, общежитипе тивĕçтереççĕ. Стипенди кунне питĕ кĕтетпĕр. Илсенех Интернетшăн тӳлетпĕр, телефоншăн укçа хыватпăр. Ытти çăкăр туянма юлать. Тумланасси пирки шухăшламалли çук. Çул хакĕ те йӳнĕ мар. Патăрьел тăрăхне, тăван киле кайса килме хаклă. Çемьере эпир виççĕн. Асли Таня университетри экономика факультетĕнчен пĕлтĕр вĕренсе тухрĕ. Вăл халĕ ĕçлет. Атте-анне пире ура çине тăратас тесе нумай тăрăшать. Вĕсене пысăк тав. Апатçимĕç ытларах – ялтан. Тепĕр чухне илсе килсе те параççĕ. Перекетлĕ пурăнма хăнăхнă эпир. Медицина факультетĕнче пĕлӳ пухнă май кино, уявсем тăрăх çӳреме вăхăт та çук. Пĕрмай вĕренмелле. Больницăсенче практика иртмелле.

**Алевтина МИТРУСКОВА, Шупашкарти машиностроени техникумĕн 4-мĕш курс студентки:**

– Социаллă стипенди – 750 тенкĕ илсе тăраттăм. Паллах, вăл çăкăр туянмалăх кăна. Çавăнпа та ирхине вĕренетĕп, каçхине ĕçлетĕп. Пушă вăхăт пачах çук. «Шупашкар» универмага дисксем сутма вырнаçрăм. Уйăхне 7 пин тенкĕ тухать. Водителе вĕренесшĕн, уншăн тӳлеме укçа пухатăп халь. Пĕлĕшсен хваттерĕнче пурăннă май нумай тăкакланмастăп. Уйăхне 1700 тенкĕ çеç илеççĕ манран. Иртнĕ сессире преподаватель «3» паллă лартса пачĕ те стипенди çинчен шухăшламалли пĕтрĕ. Хамах айăплă пуль-ха, экзамена пăртак хăюллăрах та пулмалла.

**Студентсен кĕсйисене Алина ИЗМАН, Марина ТУМАЛАНОВА, Елена АТАМАНОВА тĕрĕсленĕ.**

*САМАХ ПАРĂР-ХА*

# Тĕрĕсех калана, ой, вырăс писателĕ Лев Толстой...

**Елена АТАМАНОВА**

**Нумаях пулмасть хаçатăмăрта хула халĕ те, 21-мĕш ĕмĕрте те, тараканран хăтăлса пĕтейменни пирки çырса кăтартнăччĕ. Мĕн каласси пур – кухньăра апат-çимĕç тăрăх чупакан кăпшанкă, паллах, йĕрĕнтерет. Таракан тесен тӳрех аслă шкулта вĕреннĕ чухнехи общежити пурнăçĕ аса килет: тĕнчипех пуçтарăнса пирĕн пата куçса килнĕ пек туйăнатчĕ. Çуркунне енне уйрăмах вăйлă ĕрчетчĕç тата çавсем. Выçă студентсем патĕнче мĕн тунă-ши тулькkăш? Студент пурнăçĕпе сыв пуллашнă хыççăн, нумай çул тĕрлĕ çĕрте хваттер тара илсе пурăнсан та, вĕсемпе урăх нушаланса курман. /Карас телефонĕ пирки тарса пĕтнĕ тесе каланине илтнĕ-ха/.**

**Общежитире пурăнакан пĕлĕшĕм патне хăнана кĕрсе тухнăччĕ. Чейпе хăналарĕ. Унччен те пулмарĕ – апат шăршине сиссе сиксе те тухрĕ сĕтел çине сухаллăскер. Çын умĕнче хуçине те аван мар пулса кайрĕ. Таракансемпе кĕрешсе ывăнса çитни пирки каларĕ пĕлĕшĕм. Пурте пĕр вăхăтра эмел сапсан ĕрчейменччĕç те çав... Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнче ĕçлекенсем вентиляци пăрăхне хуплама сĕннипе çырлахаççĕ.**

**Ку çитменччĕ, юлашки çулсенче Шупашкарта хăнкăла вăйлă ĕрчесе кайни пирки калаçаççĕ. Нумаях пулмасть пĕлĕшĕм шăнкăравларĕ. Хăй йĕрет. Виçĕ каç пачах та куç хупман мăнтарăн. Хăйне, ачине шыçса кайиччченех çыртса пĕтернĕ. Мĕн тапăннине малтан тавçăрса та илеймен. Больницăна кайнă – дерматолог аллерги тесе палăртнă. Пĕррехинче çĕрле çутă çутать те – вырăн тăрăх вун-вун темĕнле кăпшанкă чупнине курать! Халĕччен курман та – паллас та çук çав. Пĕлĕшĕн куçне кӳршисем уçнă, халь хăнкăлана лайăх «паллать». Уксуспа та, скипидарпа та, вĕри утюгпа та çунтарнă вĕсене. Кăлăхах. Халăх мелĕсемпе те наркăмăшланă. Сутлăхра нимĕн те тупса илме çук-мĕн. Сивĕ çанталăкра вилет тенĕрен хăнкăла ерсе кайнă диванне урама тухса лартнă. Çапла майпа кăпшанкă йăвисенчен хăтăлнă-ха, пӳлĕмре юлнисем вара каçхине каллех тапăннă...**

**Хăнкăла тесен мана тӳрех Л.Н.Толстойăн «Азбуки» аса килет. Вĕсемпе кĕрешнинчен усси те çуккине палăртать писатель. Тарăхса çитнипе вăл кравачьне пӳлĕм варрине куçарать, кашнин ури айне йывăç чашăкпа шыв лартать. «Улталарăм эпĕ сире», – савăнать хăй. Нумай та вăхăт иртмест – хăнкăласем ун çине... мачча çинчен сикме пуçлаççĕ. Граф кĕрĕкне тăхăнать те: «Сире нимĕнле те улталама та, çĕнтерме те çук иккен», – тесе картишне тухса каять.**

**Писатель тĕрĕсех калать-мĕн: Çĕр çинчи мĕн пур çын пĕр кунра, пĕр вăхăтра хăнкăласене хирĕç кĕрешес пулсан та вĕсене пĕтерме çук имĕш. Вĕсем çавах кайăк йăвисенче, çĕр хăвăлĕсенче сыхланса юлаççĕ. Юн ĕммесĕр – выçăлла – çулталăк çурă та пурăнаять. Йăлтах типсе ларать, анчах та вилмест. Çăмартаран тин тухнă хуртсем те выçăпа аптрамаççĕ. Пĕр хăнкăла кăна çын çывăрнă чухне 15 минутра 7-14 миллиграмм юн ĕмсе каять. Çемçе ӳтлисене ытларах юратать. Кăпшанкă кунне 12-шер çăмарта хурать.**

**«Сивĕ çанталăкра вилет» тенĕрен темĕн хăтланакан та пур хулара. Пĕрисем чӳречисене уçса пăрахса хĕллехи кун яла тухса кайнă. Теприсем кăпшанкăпа кĕрешсе уксуспа наркăмăшланнă.**

**Хăнкăла киле çĕнĕ сĕтел-пуканпа, тумтирпе çакланса килме пултарать. Кĕнеке, хаçат-журнал хушшинче те вăрах вăхăт пурăнать. Тĕрĕссипе, унран хӳтĕленме те çук иккен. Никама та тиркемест. Кил-çуртра таса-и, тирпейсĕр-и – пĕр иленсен кирек ăçта та йăва çавăрать.**

**Çапах та çĕнĕ технологисен ĕмĕрĕнче пурăнатпăр. Хаçат-журнал, кĕнеке, телекуравпа радио урлă информаци нумай илетпĕр. Интернета кĕретпĕр. Сутлăхра та темĕн те пур. Саккас парсан килех илсе пыраççĕ. Организма пысăк сиен кӳрекен, çĕрĕ-çĕрĕпе юн ĕмекен хăнкăларан епле хăтăлмаллине вара халăх пĕлмест. Пасарта ятарласа хам та интереслентĕм, шел те, дихлофоссăр пуçне нимĕн те сĕнеймерĕç. Вăл вара нумай чухне шăнана та вĕлермест. Химин нимĕнле препарачĕ те çук сутлăхра. Тахçан карбофоспа усă курнă. Халь ăна та тупса илейместĕн. Юлашкинчен Интернета кĕрсе интереслентĕм. Кăпшанка хирĕç кĕрешекен фирмăсемпе тулли мар яваплă организацисем пур Шупашкарта. 10-12 тăваткал метра им-çамланăшăн 1500-2000 тенкĕ ыйтаççĕ. Мĕнпе наркăмăшланине каласшăн пулмарĕç. Тепĕр тесен, те шанма юрать... Усси пулсан тем пекехчĕ те. Паллах, шкапсене пушатмалла, стена çумĕнче нимĕн те пулмалла мар. 4-5 сехетрен пӳлĕме уçăлтарма юрать. Анчах та хими препарачĕпе пĕрре наркăмăшланипе пĕтмессе те пултарать имĕш. Маларах асăнни патне юлашкинчен çĕнĕрен таврăнас килет. Л.Н.Толстой пачах та йăнăшман иккен. 21-мĕш ĕмĕрте те çĕнтерме çук мурсене.**

*ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ*

# Патруль машинине инспекторсен сăмси айĕнченех... вăрланă

«Аварисен хисепĕ чакать пулин те çул-йĕр лару-тăрăвне лăпкă теме çук: пĕлтĕр пурĕ 2046 инкеке шута илнĕ, унта 253 çын пурнăçĕ татăлнă, 2606-ăн аманнă. Сиен йывăрăшĕ тĕлĕшпе хаклас тăк Раççейре эпир – 34-мĕш вырăнта», – пĕлтерчĕ ЧР ШĔМĕн ÇÇХПИ управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Романов 2013 çулăн кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ май.

Республикăри автомобильсен хисепĕ ӳссе пырать: пĕлтĕр кăна 25 пин транспорт нумайланнă. Çул-йĕр культури вара çав-çавах пĕчĕк. Хăвăртлăха ӳстерни, машина хирĕç килекен енне тухни, çул хĕресленнĕ çĕрте йĕркене пăсни – çакă тата ытти чылай сăлтав инкек кӳреççĕ. Руль умне ӳсĕрле ларакан пуçтахсем пирки уйрăммăн асăнчĕ Владимир Геннадьевич. Тăтăшах рейда тухни те, штраф шайĕ ӳсни те хăратмасть-мĕн вĕсене. «ПАИ ĕçченĕсем пĕлтĕр 304 миллион та 490 пин тенкĕлĕх штраф хунă! Çапах та ӳсĕрсен хисепĕ чакмасть. Уголовлă айăплав пуçарасси, автомобиле конфискацилессине пурнăçа кĕртесси пирки хĕрӳ сӳтсе яваççĕ халĕ. Саккуна çирĕплетмесĕр ку çитменлĕхрен хăтăлма çук ахăртнех», – палăртрĕ пуçлăх.

Çуран çӳрекенсем юраман çĕрте çул урлă каçни те синкерлĕх патне илсе çитерет. Пĕлтĕр çавăн евĕр 361 тĕслĕх шута илнĕ /2012 çулхинчен 9,1% ытларах/. Вăл шутра 47-шĕ ӳсĕр пулнă, 60 çын вилнĕ. Çав вăхăтрах 14 çынна «зебра» çинчех таптанă. Шупашкарта та хăш-пĕр урамра çĕрле тĕттĕмлĕх хуçаланни, çул-йĕр паллисем çукки – инкек сăлтавне ӳстереççĕ. Асăннă çитменлĕхсене пĕтересси – муниципалитетсен тивĕçĕ.

Çул çинче, хула урамĕсенче вырнаçтарнă фото-, видеофиксаци хатĕрĕсен витĕмне кура кăçал вĕсене татах та, пурĕ 48 миллион тенкĕлĕх, туянасшăн. «Стационар хатĕрĕ тĕлĕнче водительсем хăвăртлăха пĕчĕклетеççĕ, асăрханаççĕ. «Ăслă» приборсене ытларах авари пулнă тĕлте çирĕплетме палăртатпăр», – паллаштарчĕ инспекци ертӳçи.

Кăрлачăн 7-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарти ÇÇХПИ уйрăмĕнчен патруль машини «çухални» пирки те кăсăкланчĕç журналистсем. ПАИ сотрудникĕсем ĕç пӳлĕмĕнче ӳсĕр водитель тĕлĕшĕпе протокол çырнă вăхăтра лешĕн юлташĕ, хăйĕн пекех хĕрĕнкĕскер, хулари служба машини ларакан вырăна карта урлă каçса кĕнĕ. Каччăн паттăрлăх кăтартас килнĕ ахăртнех. Шăпах çав кун 24 тултарнăскер транспорта тапратнă та... хапхаранах тухса кайнă. Ярăнса çӳренĕ май Сĕнтĕрвăрри яшĕ хăйĕн йăнăшне ăнланнă, машинăна тавăрса пама шухăшланă. Каялла килнĕ чухне ярса илнĕ те ăна йĕрке хуралçисем. Ăссăрла хăтланнăшăн правасăр водителе çирĕп явап, ирĕкрен хăтарасси таранах, тыттарма пултараççĕ. Полици сотрудникĕсем тĕлĕшпе те тĕрĕслев пуçарнă.

Ĕçтешĕмĕрсен хальхинче те «шăллă» ыйту чылай тупăнчĕ. Сăмахран, пĕлтĕрхи çулталăк вĕçĕнче ПАИ сотрудникĕсем хĕрлĕ «Ауди» рулĕ умĕнчи çул çитмен çамрăксене тытса чарнă. Чăн та, хăйсен ирĕкĕпе парăнман-ха лешĕсем, хыççăн чылайччен хăвалаттарнă. Юлашкинчен патруль машинине пырса тăрăннă, ăна сиенлетнĕ. Каччăсенчен, мăйăхĕ те шăтман та, çаплах каламалла-ши, пĕри Шупашкар хула ертӳлĕхĕнче пысăк должноç йышăнаканăн ывăлĕ иккенне пĕлнĕ блогерсем. Анчах Владимир Романов: «Айăплине суд палăртать, тĕпчев пырать, çул çитменскерсен ашшĕ-амăшне çийĕнчех чĕннĕ», – тенипех çырлахрĕ. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев влаç органĕсене массăллă информаци хатĕрĕсемпе уççăн ĕçлеме чĕнсе калани аса килчĕ. Хăй те вăл пресс-конференцисенче МИХ ĕçченĕсен тата блогерсен пур ыйтăвне те анлăн та туллин хуравлать. Ытти шайри ертӳçĕсем те республика Пуçлăхĕнчен тĕслĕх илессе питĕ шанас килет.

**Алина ИЗМАН.**

*ОЛИМПИАДА*

# Команда – малта, вăйăсем – çӳллĕ шайра

Сочири Олимпиадăра тупăшма хатĕрленекен Раççей команди – чи пысăкки тата чи çамрăкки. Хĕллехи вăйăсен историйĕнче кунашкалли пулманччĕ-ха. Эрне кун унăн йышне çирĕплетнĕ – списокра пурĕ 223 çын. Чылайăшĕ çакнашкал шайри ăмăртăва пĕрремĕш хут хутшăнать.

Спортсменсене йышăнмашкăн Сочи хатĕр. Оъектсене Владимир Путин Президент тăтăшах хăй тĕрĕслет. Интервьюсенчен пĕринче вăл çĕр-шыв командине мала кăларасси кăна мар, вăйăсене çӳллĕ шайра ирттересси те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнăччĕ.

Раççей командин йышĕнче Чăваш Ен пики Елена Муратова хушамачĕ те пур. Вăл фристайл енĕпе хутшăнма ирĕк паракан лицензие илнĕ те ĕнтĕ. Нарăсăн 7-23-мĕшĕсенче иртекен Олимп вăййисенче сăрт-ту йĕлтĕрçисем тăватă дисциплинăра тупăшĕç. Унта Елена çитĕнӳ тăвасса шанатпăр. Пике 1986 çулта Мурманск облаçĕнчи Кировск хулинче çуралнă. Чылай çул вăл Мускав командишĕн ăмăртнă, 2012 çултанпа Чăваш Ен чысне хӳтĕлет.

Чăваш Енри 11 спорт судйине ăмăртусене хаклама чĕннĕ. Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 2-мĕш спорт шкулĕн тренерĕ, биатлон енĕпе спорт мастерĕ Денис Салдимиров çак кунсенче Сочие тухса кайнă та ĕнтĕ. Паралимпиадăри тӳресен йышĕнче – Андрей Михайлов, Вячеслав Ильин, Юрий Плотников, Владислав Антонов, Олег Булыгин, Валерий Васильев, Сергей Овсяников, Константин Мясоедов, Василий Никитин, Владимир Сидягин.

**Лиана ВАНИНА.**

*КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ*

# Анлă пĕлтерĕшлĕ ăнлав

Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Чăваш Енре Культура çулталăкĕ уçăлнă май савăнăçлă мероприяти иртрĕ. Çак тытăмра тăрăшакансем фойере курав, презентацисем йĕркеленĕ. Унта чăваш халăхĕн кун-çулне тĕрлĕ енлĕ кăтартма тăрăшни палăрчĕ.

Уявра ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, ытти хăна сăмах илчĕç. Чăваш халăхĕ пуян культурине, йăли-йĕркине, чĕлхине авалтан упранине, аталантарса пынине палăртрĕ Михаил Васильевич. Çавнашкалах тĕнче культурин историйĕнче çырăнса юлнă çынсене аса илчĕ, хальхи пултаруллă ăрăва та ырăпа палăртрĕ вăл. «Культура» ăнлав хутшăнусен пур тытăмĕпе те çыхăнни çинче чарăнса тăчĕ республика Пуçлăхĕ.

Культура аталанăвне тӳпе хывнисене патшалăх наградисемпе чысларĕç. Пултаруллă çамрăксене ЧР Пуçлăхĕн ятарлă стипендине тивĕçнине ĕнентерекен свидетельствăсем пачĕç. Михаил Игнатьев Культура çулталăкĕн эмблемин авторне – Красноармейски районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи информаципе культура центрĕн художникне Александр Казакова – статуэтка парнелерĕ.

Уявра республикăри сцена ăстисем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

# Шашкă вырăнне... сăвăр



Çĕнĕ çул умĕн ача-пăча лавккинче халăх хĕвĕшет. Пурте тетте суйлаççĕ. Эпĕ те пони илме кĕтĕм. Мультфильм сăнарĕ хаклă: калаçаканни – 2 пин тенкĕ ытла, ахальли, алă тупанĕнчен те пĕчĕкреххи – 700 тенке яхăн. Тĕрĕссипе, хушма хатĕрĕсем – турапа тĕкĕр – кирлĕ те мар. Китайра кăларнăскерне те илмелле ĕнтĕ? Анчах хĕрĕм Хĕл Мучирен шăпах çав парнене кĕтет. Ачан кăмăлне хуçас килмерĕ... Япала пахалăхĕсăррине пĕлсех сутуçа укçа кăларса тыттарма лекрĕ. Сахал-и унашкал тĕслĕх? Тепрехинче конструктор туяннăччĕ. Малтан хам пуçтарса пăхма тĕв турăм. Уçса пăхрăм та тĕлĕнтĕм – хатĕре чĕркенĕ çатăрка çурăлса пĕтнĕ. Çурт çумĕнчи картана хăйĕн вырăнне лартаймарăм. Килĕшмерĕ мана çав япала. Çавăнпах теттене каялла тавăрса парасшăнччĕ – сутуçă йышăнмарĕ. Сасă хăпартса калаçнă хыççăн япалана шкапа килсе хутăм. Халĕ те тытман ăна... 500 ытла тенкĕ çилпе вĕçсе кайрĕ.

«Тетте туяннăранпа 3 çул çитнĕ-и?» – лару-тăрупа паллаштарсан кăсăкланчĕ Чăваш Республикинчи потребительсен общество учрежденийĕн юрисчĕ Андрей Васильев. Ун чухлĕ вăхăт иртмен-ха та... Апла тăк япалана каялла леçме пулать иккен. Чек сыхланса юлманни те судра выляса ярассине пĕлтермест. Кӳнтелен те ыйтăва тавар туянакана майлă татса пама пулăшĕ. Çакăн çинчен, тĕслĕхрен, пурте пĕлмеççĕ. Ахальтен мар общество учрежденийĕн президенчĕ Наталия Степанова потребитель прави çинчен ял халăхĕпе курнăçса калаçасшăн. Малашне республикăри тĕрлĕ района çитсе тĕл пулусем йĕркелесшĕн вăл. Унсăр пуçне çак организаци ыр кăмăллăх акцийĕсене хастар хутшăннине асăнмасăр иртеймĕн.

Пĕлтĕр потребительсен общество организацийĕ 45 ыйтăва суд урлă уçăмлатнă, пĕрне çеç выляса янă. «Тĕрлĕ çынпа хутшăнма тивет. Хăшĕ-пĕри кивĕ япалана та лавккана каялла тавăрса парасшăн. Вĕсен ыйтăвне мĕншĕн тивĕçтерменнине çырса ăнлантаратпăр», – каласа кăтартать президент.

### Шуçса та ӳкĕн

...Паян, паллах, кăмăлсăр потребитель нумай. Тĕрĕслĕхе çиеле кăларма пулăшакансен пӳлĕмне 11 пин ытла тенкĕпе хĕллехи пушмак туяннă хĕр кĕрсе тăчĕ. Нумаях та тăхăнайман ăна – тĕпĕ çиййĕнсе пĕтнĕ. Унпа урамра шуçса ӳкнĕ. Хĕр шухăшланă тăрăх – ăна контрафакт тыттарса янă, мĕншĕн тесен пушмак тĕпĕнче фирма палли çук. Ахаль-махаль япалашăн камăн çавăн чухлĕ укçа кăларса хурас килтĕр?

Вăлах 1 миллион тенкĕ ытла тăракан автомашина туяннă. Малтан 150 пин тенкĕ хывнă. Анчах машинăна Шупашкара вăхăтра илсе килмен. Çакăншăн руль умĕнчи пике транспортпа сутă тăвакансенчен укçа шыраса илесшĕн. 30 пин тенкĕ шăпах хĕллехи резина илме çитĕ.

«Интернет урлă кирек мĕнле информаци тупма май пур. Автосалонсен капкăнне те лекет хăшĕ-пĕри. Йӳнĕпе машина сутма шантараççĕ те – транспорт хатĕрĕн пĕтĕмĕшле хакĕ ӳссе кайнине сиссе те юлаймастăн. Хурçă урхамах туяма урăх хулана туххса кайма та ӳркенмест халăх. Унта та ултав серепине лекесси часах», – çирĕплетет Андрей Васильев. Тĕслĕхрен, 750 пин тенкĕ вырăнне 1 миллион ытла тӳлемелле пулса тухать. Суту-илӳ килĕшĕвне темиçе хут вуласа тухмалла та çав.

### Çынăнне мĕншĕн тытнă-ши?

Машинăллă çав хĕр хыççăн тивĕçлĕ канури хĕрарăм килсе çитрĕ. Унăн ывăлĕ хĕсметрен таврăннă. Çамрăк патшалăх службине ĕçе вырнаçасшăн. Çарта хăйне лайăх енчен кăтартнă вăл. Унччен аслă шкулта пĕлӳ илнĕ. Волонтерсен йышĕнче пулнă. Студент çулĕсенче хăйне килĕшекен ĕçре те ăсталăхне туптанă. Анчах... шкулта вĕреннĕ вăхăтра суд сакки çине ларни ура хурать-мĕн. Ун чухне вĕсем темиçен телефон вăрланă. Çав хĕрарăмпа та юрист чылайччен калаçрĕ, пĕлĕшĕсен пурнăçĕнчи тĕслĕхсене аса илчĕ.

### Пахалăхсăр тавар

«Тĕрлĕ ӳсĕмри потребительсем шар кураççĕ. Çапах тивĕçлĕ канурисем тăтăшрах улталаннине палăртас килет», – ăнлантарать Наталия Валериевна. Чылай чухне пластик чӳрече, балкон рами улăштарни те савăнтармасть вĕсене. Кăлтăксенчен хăтăличчен таçта та çитме лекет ватăсен.

Пахалăхсăр тавар туянакансемпе час-часах тĕл пулма тивет Наталия Степановăн. Çĕрпӳ, Комсомольски, Патăрьел, Муркаш, Етĕрне... çыннисем ахальтен çула тухман. Йĕркеллĕ ĕçлемен техникăшăн сутуçăсенчен укçа шыраса илесшĕн вĕсем. «Япаласене экспертизăна яратпăр та ыйтăва хуçасем майлă татса параççĕ. Çак ĕçе тарăнрах тĕпчес пулать», – тет хĕрарăм.

### Укçине илнĕ те...

Халĕ сĕтел-пукан сутакан предприниматель нумай. Çаврăнăçуллисем паллă фирма ячĕпе усă курма та именмеççĕ – унашкаллине халăх илет. Çавна май потребительсен правине хӳтĕлекен организацин ĕç хушăнсах пынине вулакан ăнланчĕ ĕнтĕ.

Çĕнĕ Шупашкарти Татьяна Прудникова предпринимательхăйĕн хваттерне мастерскойне çаврăнă. Унта, паллах, сĕтел-пукан ăсталама йĕркеллĕ условисем çук. Çитменнине тата саккас йышăнса тултарнă, енчĕкне хуланлатнă вăл. Анчах сĕтел-пукана вăхăтра туса паман.

### Ытларах тӳлеме тивĕ

Хĕрарăмсем шукăль çӳреме юратаççĕ. Хĕлле шашка кĕрĕкĕ тăхăнас килет паллах. Анчах ăна специалистпа пĕрле е фирма лавккинче суйламаллине асра тытмалла. Унсăрăн сутуçăсен ним мар шăнман пăр çине лартса яраççĕ. Шашкă кĕрĕкĕ вырăнне сăвăр е кастарнă кролик тирĕнчен çĕлетнине тыттарса яраççĕ вĕсем.

Çĕнĕ Шупашкарти тепĕр тĕслĕх çинче чарăнса тăчĕ Наталия Степанова. Хыт кукар предпринимателĕн лавккинче хĕрарăм тĕпренчĕкĕ валли 600 тенкĕлĕх пушмак туяннă. Япала кăштахранах юрăхсăра тухнă. Хуçа укçана каялла тавăрса паман. 6 уйăх суд тăрăх çӳренĕ тĕрĕслĕх шыракансем. Предпринимателĕн 600 тенкĕ мар, 6 пин тенкĕ кăларса хума тивнĕ.

### Хваттер уççи памасан

Çĕнĕ хваттере вăхăтра куçайманни те – пуçа ыраттаракан ыйту. Пурăнмалли кĕтесшĕн укçа илнĕ строительство организацийĕ ĕçе мĕншĕн вăхăтра вĕçлеймен? Çакăншăн та пая кĕрсе çурт çĕклекенсен укçа шыраса илме май пур. Потребительсен общество учрежденийĕ кунашкал тĕслĕхсене те шута илсе пырать.

### Пăсалнă кăлпасси ăçта сутăнать?

Республикăри районсенчен килекенсене хапăлласа йышăнаççĕ кунта. Комсомольски районĕнчи Тукай Мишер çынни Шупашкарта сивĕтмĕш туяннă. Киле çитсен тин унăн алăкĕ йĕркеллĕ хупăнманнине асăрханă. Хуçа специалистсене Канашран тĕнче илме сĕннĕ. Лешсем вара çула тухма васкаман. Çур çултан тин сивĕтмĕшпе усă курма пуçланă Тукай Мишер çынни. Потребительсен обществоучрежденийĕ çине тăнипе хатĕре Шупашкара илсе килнĕ, унăн алăкне улăштарнă. Транспорт расхутне лавкка хуçи тӳленĕ.

Срокран тухнă апат-çимĕç сутнине час-часах тупса палăртаççĕ потребительсен правине хӳтĕлекенсем. Ку тĕлĕшпе Комсомольски, Шăмăршă, Патăрьел районĕсенчи лавккасем списокра – малти вырăнта. Çав вăхăтрах Вăрмар районĕнче çакнашкал тĕслĕх куç тĕлне пулман.

Чăваш Республикинчи потребительсен общество учрежденийĕ çитес вăхăтрах тĕрлĕ рейд йĕркелеме палăртать. Çакă тавар пахалăхне тĕрĕслеме май парĕ. Тĕрĕслевçĕсемпе пĕрле «Чăваш хĕрарăмĕн» корреспонденчĕ те рейда тухма палăртать.

**Мария РОМАНСКАЯ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

АЛĂ ĂСТИСЕМ

# Чăваш тĕрри вырăс хĕрарăмĕсене те кăсăклантарать

*Илемлĕ, илемлĕ чăваш тĕрри,*
*Илемлĕ чăваш тĕрри те тĕрлеме пĕлсен кăна.*

Чăваш тĕрри-эрешĕ илемлĕ кăна мар, калама çук пуян та. Вăл ытти халăхăннинчен чылай уйрăлса тăрать. Авалхи чăваш тĕрри икĕ енчен пăхсан та – хăть тӳнтер, хăть пиччен – пĕрешкел. Çакă чăваш хĕрарăмĕ тирпейлĕ, çав вăхăтрах чăтăмлă пулнине пĕлтерет. Унсăр пуçне мĕн пур тĕрĕрех геометри орнаменчĕ пур. Ансатлăх пачах курăймăн. Чечек-çулçă таврашĕ те çук.

2009 çулхи ака уйăхĕнче наци тĕррипе интереслеекенсем Шупашкарти Маяковский ячĕллĕ вулавăш çумĕнче «Тĕрĕ тĕнчи» клуб йĕркеленĕ. Пархатарлă та ырă ĕçе пуçараканĕ – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, паллă Раççей халăх ăсти Валентина Минеева. Пултарулăхне кура клуб ертӳçи пулма чи çамрăккине, Шупашкарти 60-мĕш вăтам шкулта чăваш чĕлхи вĕрентекен çамрăк пикене Надежда Кузнецовăна шаннă. Ылтăн алăллăскер тĕрĕ вăрттăнлăхĕпе паллаштарнисĕр пуçне чăваш халăхĕн ылтăн çӳпçине тĕпчет. Клуба çӳрекенсене эрешсене вулама вĕрентет. Авалхи çырулăх, чăваш йăли-йĕрки, сăмахлăхĕ, юрри-кĕвви, тĕрри-çĕвви кăсăклантарать ăна. « Пирĕн аваллăх питĕ пуян, ăна манăçа кăларас килмест. Ытти халăх çынни те эпир мĕн тери вăйлă та ĕçчен иккенне пĕлтĕр», – тет çамрăк тĕрĕ ăсти.

Тĕрĕссипе, асăннă клуба шкула çӳрекен хĕр пĕрчисем валли йĕркеленĕ. Анчах та ачисенчен ытларах амăшĕсем çӳреме пуçланă. Ӳкĕтлесех ыйтакансене хăваласа яраймăн паллах. Вĕсене те йышăнма тивнĕ. Тĕрлеме вĕренес шухăшлисен хушшинче тата... пĕр чăваш хĕрарăмĕ те пулман. Чăваш чунлă маттур вырăс хĕрарăмĕ те нумай иккен Шупашкарта.



Клуб уçăлсанах килти мĕн пур ĕç çинчен манса кайса çур çĕр иртни вису сехетчен те тĕрлесе ларнă. «Ыйхă та килместчĕ, юрла-юрла ĕçлеттĕмĕр. Ирхи ултă сехетре вăранса кулленхи ĕçе васкаттăмăр», – хавхаланса каласа кăтартаççĕ ăстасем. Хальхи вăхăтра кунта тĕрлĕ ӳсĕмри /шкул ачисенчен пуçласа пенси çулĕнчисем таранах/ çынсем çӳреççĕ. Кашнин хăйĕн тĕнче курăмĕ. Пурин те расна ӳкерчĕк. Çапах та, кирек мĕнле пулсан та, шурă пир çинче – чăн-чăн чăваш тĕрри. Клуба çӳрекенсенчен ытларахăшĕ – тури чăваш хĕрарăмĕсем. Вĕсен тĕрри вĕтĕрех, çавна май тата илĕртӳллĕрех курăнать.

Иртнĕ эрнере Республикăри халăх пултарулăхĕн çуртĕнче «Тĕрĕ тĕнчи» клуб ĕçченĕсен куравĕ уçăлчĕ. 5 çул каялла вĕсем кун пирки ĕмĕтленме те пултараймăн. Халĕ ав стена тулли – тĕрĕ. Чунран, юратса эрешленĕ сĕтел çи виттисемпе минтер пичĕсем, масмаксемпе сурпансем... Пир кĕпесемпе каччă тутрисем уйрăмах паха та илĕртӳллĕ. Çĕрĕçĕрĕпе ахальтен ларман иккен. Куç тулли ĕçĕсем кирек кама та ăмсантармалла халь. «Ӳркенмен ăста пулнă» каларăша тĕпе хунах тĕрĕçĕсем.

Çĕнĕ Шупашкарти 8-мĕш шкулта чăваш чĕлхи вĕрентекен И.Григорьева тĕрĕçĕ вулавăшра каçсерен еплерех улах ларнисĕр пуçне тĕлĕнтермĕш каласа кăтартрĕ уявра. Вăл хăйĕн ĕçтешне телефон енчĕкĕ тĕрлесе парнеленĕ. Лешĕ Улатăрти учительсен конференцине кайсан сумкине вăхăтлăха ыттисемпе пĕрле хунă. Кайран пăхать те – хайхи чăваш тĕрриллĕ енчĕк çук! Телефон та, укçи-тенки те выртнах. Кун пеккине сутлăхра тупса илме çук çав. Тĕрлеме мехел çитерейменскер-ши? Йăкăртса кайнă парнене.

«Тĕрĕ тĕнчи» клуб кăçал 5 çул тултарать. Çак кĕске хушăра Пĕтĕм Раççейри, республикăри, хулари конкурссене хутшăнса темиçе хутчен дипломсене тивĕçнĕ алă ăстисем. Клуб ĕçченĕсем тăрăшнипе чăваш тĕрри пирки Раççейре кăна мар, Данипе Швецире те пĕлеççĕ халĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**



**ЭПИР ÇЫРНĂЧЧĔ**

**Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çĕнĕ сезона уçнă май, юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче, «Сутăн илнĕ чыс» драмăпа савăнтарчĕ. Пьеса авторĕпе Анатолий Хмытпа «ЧХ» вулаканне çийĕнчех паллаштартăмăр, ăнăçлă ĕçшĕн унпа пĕрле савăнтăмăр. Аса илтеретпĕр: асăннă хайлав 2012 çулта чăваш драматургĕсен конкурсĕнче лауреат ятне çĕнсе илнĕччĕ. Анатолий Ефимов Афган вăрçинче пăшал тытса икĕ çул та пилĕк уйăх çапăçнă. Вăрçă синкерне хăй тÿссе ирттернĕ.**



# Эрĕм тутиллĕ пыл, е Вăрçă йÿççине пылаклатма кирлех-ши?



### Репертуартан мĕншĕн кăларнă?

Аса илтеретпĕр, драмăри ĕççем иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенче пулса иртеççĕ. Пĕр тăван Павăлпа Петĕр Афганистан вăрçине лекеççĕ. Пурнăçпа вилĕм хушшинче этем ăш-чикĕ йăлтах таврăнать: асли душмана питренех сурать пулсан кĕçĕнни унăн урине те чуп тума, хăйĕн тăванне вĕлерме хатĕр – çăлăнасчĕ кăна... Анчах вăрçă коррупцине пула Петĕр паттăр пулса тăрать: ăна, хăравçă та сутăнчăк салтака, орден та, чап та, укçа та тивĕçет. Павăла вилнĕ тесе шухăшлаççĕ. Анчах чĕрĕ юлма ăна турă пилленĕ иккен. Темиçе çултан вăл тăван ялне таврăнать. Пиччĕшĕпе шăллĕ хушшинче хирĕçÿ çуралать. Сцена искусствин саккунĕпе килĕшÿллĕн сăнар аллинчи пăшал кĕрслетет.

Çĕнĕ спектакль пĕлтĕр сцена çине пурĕ те виçĕ хутчен тухрĕ те сасартăк... çухалчĕ. Кашнинчех тулли зала пухакансене репертуартан мĕншĕн кăларнă-ха?

Спектакльти хăш-пĕр самант Афган вăрçинче пулнă темиçе ветерана килĕшмен-мĕн. Вĕсем çакăн пирки Раççей десантникĕсен пĕрлешĕвĕн Чăваш Енри уйрăмĕн председательне Игорь Кашаева пĕлтернĕ, ыйтăва анлă ларура сÿтсе явнă. Анчах десантниксен ертÿçи спектакле хăй курса хаклас темен. Афган вăрçин ветеранĕсене салтак тумĕ тăхăнса, наградăсене çакса пĕтĕм халăх умĕнче сцена çине тухса спектакле чарса лартма йыхравлать вăл. /Çакна йăлтах видеопа ÿкерсе Интернета та кăларса хунăччĕ. Чăн та, халĕ ăна унта кураймăн/. Ларăва хутшăннисем артистсене помидорпа пеме, пĕтĕм билета туянма, культура министрне пĕлтерме сĕнеççĕ. Мĕн палăртнине йăлтах пурнăça кĕртмен пулин те Игорь Кашаев ертсе пынă ушкăн театрăн илемлĕх ертÿçи Валерий Яковлев патĕнче шăвшав çĕкленĕ. Çакăн хыççăн пĕр вăхăт спектакле кăтартма чарăннă та. Унтапа вăхăт чылай иртрĕ. «Сутăн илнĕ чыса» кăрлачпа нарăс репертуарне кĕртнĕ, анчах драма халĕ те хĕрÿ тавлашу çуратать. Нумаях пулмасть Афган вăрçин десантникĕсем ЧР культура министрĕ патне çитнĕ çапах та. Кун пирки Игорь Кашаев хăй каласа кăтартрĕ.

### «Чăнлăх çук»

«Мĕнпе тивĕçтермерĕ-ха сире спектакль?» – телефонпа çыхăнса çак ыйтăва хуравлама ыйтрăмăр унтан. «Тĕрĕслĕх çукки, шухăшласа кăларни килĕшмерĕ. Ман шухăшпа, пьесăна вăрçă курман çын çырнă. Çар чаçĕнче пулса иртекен самантсем, сăмахран, чăнлăхпа пĕр килмеççĕ. Çавăн пекех тупăкра наркотик турттарнă пулса тухать... Чикĕ урлă каçнă чух çирĕп тĕрĕслев витĕр кăлараççĕ, апла тăк наркăмăш пирки калани те – суя. Совет салтакĕпе офицерне хăравçă, мулшăн çунакан евĕр сăнланă, вĕсен чи нишлĕ туйăмĕсене палăртнă автор. Кайран çав çынсенех паттăр пек кăтартаççĕ.

Тĕп герой тивĕççĕр наградипе тухсан залра лараканСенчен пĕри: «Çакса янă, кур-ха», – тенине илтнĕ манăн юлташ. Ÿлĕмрен орден-медале мĕнле сăнпитпе çакса çÿремелле пирĕн? Çав спектакле курнă çынсем пирĕн пирки мĕн шухăшлаççĕ?

Кĕçех Совет çарĕсене Афганистанран илсе тухнăранпа 25 çул çитнине паллă тăватпăр. Пире начар енчен хаклакан, чыс пирки иккĕлентерекен спектакль пĕлтерĕшлĕ уяв умĕн пушшех вĕчĕрхентерет. Патриотлăх туйăмне çĕклес тĕллевпе пирĕн пĕрлешÿ турнир, хăюлăх урокĕ чылай йĕркелет. Пьеса çамрăк ăрăва начар витĕм кÿрет тесе шухăшлатпăр», – палăртрĕ Игорь Михайлович.

Республикăри çар комиссарĕн ветерансемпе ĕçлекен пулăшуçи Александр Осипов, вăл та Афган вăрçин ветеранĕ, çĕнĕ пьесăра чылай çитменлĕх асăрханă: «Унти ĕç-пуç чăнлăхпа пачах пĕр килмест. Сăмахран, командир хăйĕн кĕсйинчен орден кăларса салтака çакса яни ĕмĕрне те пулман! Аманнă салтак ту хушшинче выртса юлать – ăна вара шырамаççĕ те...» – сăмахне тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ вăл.

### Ветерансем ыйтнине шута хунă

Спектакль режиссерĕпе Иван Иванова та курнăçма май килчĕ. «Спектакль вăрçăн чăнлăх енне кăтартать: кунта коррупци те, вăрласси те, хура ытти япала та курăнать. Тĕрĕсех, паттăрлăх пирки калаçу пымасть кунта. Кирек епле вăрçă та – пакăç, халăх пуçне çиекен пулăм. Вăл пурин пурнăçне те пăтратать, хĕне ярать. Ку спектакльте çав чăнлăха Афган вăрçин тĕслĕхĕ çинче никĕсленĕ. Халĕ, чылай вăхăт иртнĕ май, ăна та тĕрлĕ енчен тĕпченĕ, фактсемпе çирĕплетнĕ, вăл шутра наркотик пирки те, наградăсем тĕлĕшĕпе те. Çавăнпа та куракан ăна тĕрлĕрен йышăнчĕ. Пĕрисем спектакльтен ĕсĕклесе тухаççĕ, çав вăхăтрах теприсен пичĕ хĕрелет. Тĕрĕссипе, премьера хыççăнах шăв-шав çĕкленессе кĕтнĕччĕ эпĕ, мĕншĕн тесен кунта куçа кĕрекен чăнлăх нумай.

Хаклакансем ыйтнине мĕншĕн шута хунă-ха? Вĕсене: «Эсир никамах та мар, ахаль куракан кăна», – тесе хуравлама та пултарнă. Пĕри килет те апла улăштарма хушать, тепри – капла... Анчах çав куракансем афганецсен пĕрлĕхĕнче тăнине кура вĕсен шухăшне те шута илтĕмĕр. Ăна тĕпе хуни театрăн илемлĕх ертÿçи Валерий Яковлев мĕн тери пысăк чунлă çын пулнине кăна кăтартрĕ – чăваш ăс-хакăлĕ çавнашкалçке. Вăрçăра çапăçнă çынсене хирĕç кăяс темерĕ. Вĕрирех сăмахсене, курăнусене улăштартăмăр. Критиксем пĕрех лăпланмарĕç – çÿллĕрех шайри пуçлăхсем патне çитрĕç. Халĕ татах та «çемçететпĕр», тĕшши уншăн пĕрех çухалмĕ. Çĕнĕ верси хыççăн хирĕçлекен пулмалла мар туйăнать...» – пĕлтерчĕ Чăваш Республикин халăх артисчĕ Иван Иванов.

### «Афган синдромĕ»

Паянхи куна республикăра Афган вăрçин ветеранĕсен 3-4 организацине шута илнĕ. Вĕсен шухăшĕ те пĕр килмест. Петĕрпе Павăл пекех ветерансем пĕр-пĕринпе пĕр чĕлхе тупаймаççĕ-мĕн. «Ку – тĕрлĕ майпа палăракан «Афган синдромĕ». Пьесăри орден пирки кăтартнине хирĕçлекенсем – паттăрлăх чирĕпе аптăракансем. Наградăна чăнласах çапăçса, юн юхтарса тивĕçнисем урăхларах йышăнаççĕ», – çирĕплетет Анатолий Хмыт.

Раççейри «Вăрçă инвалидĕсем» общество организацийĕн Чăваш Енри уйрăмĕ Анатолий Ефимова Тав хучĕпе чысланă. «Уявра 500 ытла çынччĕ, вĕсем çав самантра пурте ура çине тăрса тăвăллăн алă çупрĕç. Спектакле пырса курас кăмăллисем нумайăнччĕ. Шел, ун чухне ĕмĕте пурнăça кĕртеймерĕмĕр, спектакле кăтартма пăрахрĕç», – пĕлтерчĕ Владимир Яковлев ветеран.

### Спектакльшĕн – медаль

«Чăваш театрĕсем Афган темине халĕччен çутатманччĕ-ха. Пирĕншĕн, вăрçă ветеранĕсемшĕн, çакă питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çынсем халĕ мистика, шоу, камит ытларах пăхма кăмăллаççĕ, пурнăç чăнлăхĕпе пуçа ыраттарасшăн мар. «Сутăн илнĕ чыс» спектакле сцена çине кăларакансем истори страницине çавăрса хума хăюлăх çитернĕ, самана чăнлăхне умне кăларнă. Премьерăпа паллашнă май çакна асăрхарăм – зал тулли халăх тăвăллăн алă çупса артистсене чылайччен тав турĕ, вĕсем мĕн калас тенине ăша хывrĕ. Хальхи куракана улталама çук – спектакле хаклама пĕлет вăл, килĕшмен драмăна курма каймĕччĕ.

Хăшĕ-пĕри: «Суя, тĕрĕслĕх çук кунта», – тенипе килĕшместĕп. Афганистанра çар хĕсметĕнче тăнă пĕр пĕлĕше, борт техникĕччĕ вăл, арестленине ас тăватăп. Вăл тупăкра кĕрĕксем турттарнă-мĕн. Çакăн пек тĕслĕхсем сайрахутра çапах та пулкаланă. Вăрçăра хура ĕçпе аппаланакан кирек хăш саманара та пулнă. Раççей фильмĕсенче те сăнланнă çакă. Çав спектакльте хăшĕпĕри хăйне палласа илме те пултарнă тен. Ман çумма, сăмахран, драмăра кăтартнă таса марлăх çыпăçмарĕ.

Халĕ пирĕн хамăра йĕркеллĕ тытасчĕ, ят-сума хамăрăн ырă тĕслĕхпе кăна çирĕплетесчĕ», – палăртрĕ çÿлерех асăннă общество ертÿçи Геннадий Матвеев. Афган темине çутатнăшăн Иван Иванова «Ветерансен юхăмне аталантарма пулăшнăшăн» медальпе наградăланă вĕсем.

### Куракана çухатас марччĕ

Анатолий Хмытăн пĕрремĕш пьеси тавра шăв-шав çĕкленни автор çынсен чун-чĕрине хускатнине çирĕплетет. Апла тăк хайлав хăйĕн тĕллевне пурнăçланă теме юрать. «Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев мана малтанах асăрхаттарчĕ: «Премьера хыççăн спектакле касаççĕ, вакласçĕ... Тепĕр виçĕ çултан хăвăн пьесуна паллами те пулатăн», – терĕ. Çавăнпа та улшăну пуласса кĕтнĕ эпĕ. Пĕрремĕш вариантра вĕçĕнче амăшĕ вилетчĕ. Халĕ усал сăнар – Петĕр – перĕнет. Ман шухăшпа, вăл, пурнăçа юратаканскер, хăйĕн çине алă хума пултараймасть. Путакан улăм пĕрчинче те çăлăнăç шырать теççĕ. Петĕр те вăрçăран чĕрĕ таврăнассишĕн чунне сутма хатĕр... Юлашки курăнура сцена хыçĕнче пăшал кĕрслетет. Пурте Петĕр перĕнчĕ тесе шухăшлаççĕ, çакăнпа спектакль вĕçленет. Тен, вилмен те вăл? Кун пирки те куракан хăй пĕтĕмлетÿ тутăр. Çапах та Афган колоритне, сывлăшне çухатни, хăш-пĕр сценăна кăларни – пуçа каснăпа танах. Халĕ тата сценарирен «Афган» сăмаха пачах кăларма ыйтни çинчен те пĕлтĕм, чуна витерекен юрăсене те «каснă». Малтанхи верси архиври сыхланса юлни кăна лăплантарать мана. Автор правипе усă курса телекурав фондне те ăнах сĕнĕп. Театрăн илемлĕх ертÿçи, СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев: «Спектакле çухатас килмест», – тенĕренех улăштарма ирĕк патăм. Кăрлачăн 15-мĕшĕнче театрта пулма тÿр килчĕ: зал çурма пушăччĕ, спектакль пынă вăхăтрах шăпăлтатса лараççĕ. Сценарие лайăхлатас тĕллевпе тÿрлетÿсем кĕртнĕ май куракана çухатас марччĕ çеç», – пĕлтерчĕ Анатолий Хмыт.

Материала вĕçленĕ май çакна калас килет: вăрçă йÿççине пылаклатса кăтартма тăрăшни куракана кирлех-ши? Эрĕм тути калакан пыла çăтас килĕ-ши унăн? Кашни хăй татса парĕ çакна. Анчах, пурнăçра ыррипе пĕрле усал та çÿрет. Çавна уйăрма вĕренесчĕ те хамăрăн начар енсене пĕтерессишĕн тăрăшасчĕ пирĕн. Театр тĕллеве пурнăçлама пулăшать кăна.

**Алина ИЗМАН.**

## 27 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЛАДОГА» 16+
23.40 «Познер» 16+
0.40 Х/ф «БОЛЬШОЙ» 12+
2.35, 3.05 Х/ф «ГОРЯЧИЕ ГОЛОВЫ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Восход Победы. Падение блокады и крымская ловушка» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «Женское счастье» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПАПА В ЗАКОНЕ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ДВЕ ЗИМЫ И ТРИ ЛЕТА» 12+
23.45 Специальный корреспондент 16+
0.50 «Девчата» 16+
1.30 Т/ф «ПРОТИВОСТОЯНИЕ»
2.55 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
3.45 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Вести-Чувашия**

### Россия К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «СОСТЯЗАНИЕ БЕЗ ПРАВИЛ»
12.15, 15.40, 1.45 «Мировые сокровища культуры»
12.30 «Линия жизни»
13.25, 22.10 Д/с «Музейные тайны». «Музей Метрополитен»
14.10 Х/ф «ПЛЕН СТРАСТИ»
15.10 «Уроки рисования с Сергеем Андриякой» «Тюльпаны»
15.55, 20.45 «Острова»
16.35 Х/ф «РАБА ЛЮБВИ»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.15 «Правила жизни»
21.25 «Тем временем»
23.00 «Белый ответ»
23.50 Д/ф «70 лет со дня полного освобождения Ленинграда от блокады. «Читаем Блокадную книгу»
1.30 И. С. Бах. Бранденбургский концерт №3

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
21.25 Т/с «ШАМАН-2» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Х/ф «ЭТАЖ» 18+
1.10 «Лучший город Земли» 12+
1.45 Внимание! С 1.45 до 6.00 вещание для Москвы и Московской области осуществляется по кабельным сетям
2.05 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ОСНОВНАЯ ВЕРСИЯ» 16+
5.00 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.30 Х/ф «ЧЕМПИОН МИРА» 12+
10.10, 21.45 Петровка, 38 16+
10.30, 11.50 Х/ф «БАРМЕН ИЗ «ЗОЛОТОГО ЯКОРЯ» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
12.25 «Постскриптум» 16+
13.30 «В центре событий» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
15.55 Х/ф «МЕРСЕДЕС» УХОДИТ ОТ ПОГОНИ» 12+
17.50 «Котрабанда» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ЧИСТАЯ ПРОБА» 16+
**эреш тупни е туянни** – палăртни ăнăçлă пурнăçланасса,

**ваннă, çĕмĕрĕлнĕ эреш** – тĕллев пурнăçлансан та кăмăл хуçăласса, юлташсем сутасса, пур ĕç-пуç сирĕн хул пуççи çине тиенессе,

**эрешпе илемлетнĕ çи-пуç** – сайра-хутра пулакан ăнăçăва,

**сын çинчи эреш** – юлташăр чапа тухасса,

**пÿрнери çĕрĕ хĕстерни, тăварри** – хутшăнусем чăрмав кÿрессе,

**ахах çĕрĕ** – куççуле,

**çĕрĕн куçĕ тухса ÿкни** – хута кĕрекене çухатасса,

**çĕрĕ çухални** – çемье арканасса,

**туй çĕррине арçын курсан** вăл авланма хатĕррине пĕлтерет.

ШУТА ИЛМЕ

- Çăратнă сĕте вĕретнĕ ăшă шывпа хутăштармалла.
- Специалистсен шухăшĕпе кăркка – аллерги кăларман пĕртен-пĕр какай.
- Кухньăра усă куракан ал шăллине уксус хушнă шыва чиксе лартмалла, унтан тин çумалла.
- Симĕс пăрçана тăвар яман шывра пĕçермелле.
- Какай фаршне лайăх пăтратсан катлет тутлă пулать.
- Вĕттĕн туранă сухан хăвăртах хăйĕн шăршине çухатать. Çакă пахча çимĕçри эфир çăвĕ часах çухалнипе çыхăннă.



# Шурă чечек çыххи

Пĕрмаях таçта çухалса çӳрекен ула ĕне çав каçхине киле хăех таврăнчĕ. Витрине малтанах хатĕрлесе хунă анне Маньăн çиллине çунă хыççăн тӳрех сума ларчĕ. Кĕтӳрен таврăннă хыççăн ĕне çитерме тухасси йăлана кĕнĕ пирĕн тăрăхра. Камăн вăхăт çук – улăхран утă çулса килсе парать. Теприсем выльăхне кӳршĕ ачисене шансах кăларса яраççĕ. Халĕччен никамăн та ĕне тавраш çухални пулман-ха.

Маня киле час çул тупнăран улăха эпĕ пуринчен те маларах çитрĕм. Кĕтӳре иртен пуçласа каçченех симĕс çаран çинче çӳренĕ пулин те ĕне ешĕл клевера çăвар тулли çиме пуçларĕ. Тӳпене тулли уйăх шуса тухрĕ. Çĕртме уйăхĕнче кун вăрăмланса пынă май, каçхи вуннăра та çап-çутах çав. Лăпкă пирĕн тăрăхра, никамран шикленмелли те çук, çавăнпах ашшĕ-амăшĕ вĕт-шакăра каçа хирĕç шанса кăларса ярать те ĕнтĕ.

Акă пĕрин хыççăн тепри тантăшăмсем çитрĕç. Таня кăна темшĕн халĕ те çук. Тетĕшĕ салтакран таврăнасса кĕтетчĕ-ха вăл. Кун-каçа пĕр-пĕриншĕн тунсăхлама та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ эпир. Мĕн тĕрлĕ кăна вăйă вылямастпăр-ши çĕрĕпе: вун икĕ патакла, çĕрĕлле, суккăр такалла, хăлхасăр телефонла, тутăрла... Тайăлнă ватă йăмра туратти çине пухăнса ларса пăшăл пăтти пĕçересси вара темрен хаклă. Улăх хĕррипе сарăлса выртакан ыраш пуссинчен чечексем пуçтаратпăр та юрла-юрла пуç кăшăлĕ çыхатпăр. Уйрăмах утмăл туратран хӳхĕм пулать. Ĕнесем çинчен те манса каятпăр тепĕр чухне.

Аслăраххисем пире хăйсен ушкăнне илесшĕнех мар. Ăнланмалла-ха, ахальтен «ытлашши хăлха» теççĕим?! Кам кампа çӳрени, каччăсене сӳтсе явни калама çук интереслĕ те, пире наччасрах хӳтĕрсе яраççĕ çав. Ĕнисене те, тĕрĕссипе, ячĕшĕн кăна е ашшĕамăшĕ хистенипе илсе тухаççĕ. Савнийĕсемпе тĕл пуласси хаклă вĕсемшĕн. Тынашкисем колхоз çĕрĕ çине кĕрсен кăна кирлĕ эпир. Хăва туратти хуçса илсех хăвалама тивет чупкăнсене. Аслисене мĕн пĕчĕкрен итлеме, пăхăнма хăнăхтарнă çав атте-анне. Кутăнлашса тăрас йăла çук пирĕн. Кăмăллă-и-ха тата, колхоз çĕрне сыхлакан Юркка тете таçтан та асăрхать, хăйĕн çил хăванне утланса часах вĕçтерсе çитет. Ун чухне вара пурне те лекет. Кĕç-вĕç шкул пĕтерсе тухса каякансене каччă шăрши кĕнех çав. Акă каç тĕттĕм чатăрпа хупланса пынă май Çĕньял, Кăтаймас, Паçулкка ялĕсенчен пĕрин хыççăн тепри кĕрлеттерсе мотоцикл килсе чарăнать. Пире, хĕр шутне кĕме тытăннăскерсене, вăрттăн сăнаса ларма интереслĕ. Кам камшăн çуннине, çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупманнине хăйсенчен те лайăхрах пĕлетпĕр эпир. Лешкасри Люба вун сакăр çула çитнĕ те халĕччен никампа туслă пулса курманран ват хĕр пулса юласран кулянать. Михалук пиччесен хĕрĕ Люда пирĕнтен икĕ кил урлă пурăнакан ман тантăшăн тетĕшне – Сашука – килĕштерет. Адресне почтальонран илсе темиçе хутчен çыру та шăрçалам пекки туса пăхнă, анчах та хурав кĕтсе илеймен. Пĕрмай вара Таньăна: «Тетӳ çырать-и?» – тесе халтан ярать. Салам çырма хушать. Çӳллĕ те яштака, хитре хăмăр куçлă, хумлă-хумлă хура çӳçлĕ йĕкĕт такама та килĕшмелле çав. Тетепе туслă пулнăран шкулта вĕреннĕ чухне пирĕн патран тухма та пĕлместчĕ вăл. Хĕлле пахчана юр хӳсе каятчĕ те, кунĕн-çĕрĕн окоп чаватчĕç. Пахча хыçнех çитнĕрен пĕр кĕрсен аташса кайма та пулатчĕ. Вырсарни кун вара анкартинче «вăрçă» пуçланатчĕ. Кунĕпех: «тă-тă-тăт, тă-тă-тăт!» Кашнинчех совет салтакĕсем çĕнтеретчĕç, нимĕçсем выртса юлатчĕç.

Таньăн тетĕшне салтака ăсатни халĕ те куç умĕнчех. Пĕр кун маларах анне чей ĕçме илсе килнĕччĕ ăна. Пиллесе укçа пачĕ, кайран кăкри çине шап-шурă ал шăлли уртса ячĕ. Ирхине вара асаннепе салтак ăсатма кӳршĕсен хапхи умне кайса тăтăмăр. Халăх нумай. Таня сак çине лăпчăнса ларнă та йĕрет. Ăна курсан ман та куççуль пăт! пăт! тумлама пуçларĕ. Тул çутăлнă-çутăлман илсе кайрĕç Сашука. Машинăна ларас умĕн пуринпе те ал тытса сыв пуллашрĕ те, малтан йăмăкне, кайран мана йăтса илсе пит çăмартинчен чăпăрт чуп турĕ. Вăтаннипе хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрăм та асаннене кĕтсе тăмасăрах килелле вĕçтертĕм. Пĕчĕкрен аслăраххисемпе калаçма юратнă май Таньăн кукамăшĕпе туслăччĕ эпĕ. Юмах ăстиччĕ вăл, пурнăçра чăн та пулса иртнĕ пек, ĕненмелле каласа пама пĕлетчĕ тата. Таня чирлесе больницăна лексен Улька кинеми мана пĕр-икĕ хутчен те Сашук патне çыру çыртарнăччĕ.

Ĕнтĕ ĕнесем те куçран çухалчĕç. Ури айĕнче ем-ешĕл курăк пулин те колхоз ани çине кăна пăхса тăраççĕ.

– Эй, вĕт-шакăр, паппа тума вăхăт! – киле каймаллине систерсе янрашма пуçлаççĕ аслисем. «Вĕт-шакăр» тени, пире, вун пилĕк çултан каçнăскерсене, пăртак кӳрентерет те. Унтан пĕрин хыççăн тепри: «Пирĕн ĕнене те илсе кайăр-ха», «Хапхана уçса кĕртсе ярăр-ха», – тесе йăлăнма пуçлать.

Эпир аслисем хăваламасăрах киле каяс шухăшлăччĕ ĕнтĕ. Унччен те пулмарĕ: «Сашук таврăннă! Сашук!» – кĕрлесе кайрĕç пирĕн кассем. Чăн та, гимнастеркăллă яштака каччă васкамасăр кунталла килет. Вăлах. «Ши!» – шăхăрчĕ темиçе хутчен тепĕр енчи кӳршĕм. Юлташĕсем Сашука йăтса илсе темиçе хутчен çӳлелле ывăтрĕç. Каччă çинчен куç илмест Люда. Чĕрене хушма çук теççĕ çав. Сашук хĕрсене сывлăх сунса çаврăннă хыççăн пирĕн паталла çывхарчĕ. Эпир чечек кăшăлĕсем тăхăннă та сăнаса ларатпăр.

– Йăмра айĕнче кам чиперукĕсем вăрттăн пăшăлтатаççĕ, – терĕ те пирĕн ума пĕшкĕнсе ларчĕ. – А-а-а, кунта ман савни те пур иккен! Салтака йĕре-йĕре ăсатаканни, тĕлĕнмелле хитре çырусем шăрçалаканни! – тĕттĕмре палласа илсе мана тăрук хăй çумне хыттăн-хыттăн пăчăртарĕ.

Вăтаннипе çĕр тĕпне анса кайманни кăначчĕ. Салтака кайнă чухне пит çăмартинчен чуп тунинчен те ытларах хĕрелтĕм пулĕ. Ара, халĕччен пĕр каччă та алăран тытса курман-иç. Кĕтӳрен килмесĕр тарăхтаркалать те, çапах пирĕн Маня ăслă çав. Ытла кая юлсан эпĕ мар, вăл мана шырать. Ĕнене хăваласа хăвăртрах сукмак çине тухрăм. Сывлăм ӳкме ĕлкĕрнĕ, шурлăхлă вырăнта пушшех йĕпе. Тантăшăмсем ман хыçран васкамасăр утаççĕ. Аванмарланнипе никампа та чĕнсе калаçас килмест. Ĕнтĕ пралукран иртсе хамăр касалла пăрăнса кĕме кăна ĕлкĕрнĕччĕ, такам хăваласа çитсе хăрах аллипе куçа ăшшăн хупларĕ. Пĕччен пулсан-и, пĕр урам хурах кăшкăраттăм-ха. Анчах та темшĕн хальхинче кăлт та сикмерĕм, хĕрсем пĕрмай çапла шӳтлеме юратаççĕ те. Вăрт çаврăнтăм та – аллисене хыçалалла тытса Сашук тăрать.

– Ку сан валли! – терĕ ман çине ăшшăн пăхса. Тем пысăкăш чечек çыххи!

– Сан валли ятарласа шап-шуррисене, çурăлса çитейменнисене татрăм. Сывлăмпа йĕпенме ĕлкĕрнĕ вĕсем пăртак.

Эпĕ çухалса кайнипе пĕр сăмах та чĕнеймерĕм, тав тума пĕлмесĕрех чупса кайрăм. «Мĕншĕн, мĕншĕн ман валли?» – нимĕн те ăнланаймасăр хама хам ыйту хыççăн ыйту патăм. Çав каç хăй пĕр ĕмĕре çаврăнчĕ. Ман пурнăçри пĕрремĕш куç хупман каç.



Асанне мĕнле хистесен те ĕне çитерме урăх тухмарăм эпĕ. Лешкасри Хветура инкепе иккĕшĕ çӳреме пуçларĕç. Тетĕшĕ Чĕмпĕре авиаци институтне вĕренме тухса кайнине пĕлсен те Таня патне каçмарăм. Кӳренместчĕ вăл, темĕн сисетчĕ-ши, нимĕн те ыйтмастчĕ, хăй килетчĕ ман пата. Тетĕшĕнчен çыру илсен вуласа тухатчĕ те: «Сана пысăк салам!» – тесе ман çине чеен пăхса илсе ăшшăн кулатчĕ.

* * *

Вăхăт епле хăвăрт иртет, икĕ теçетке ытла та хыçа юлчĕ унтанпа. Эпир ача чухне ĕне çитерме çӳренĕ улăх халĕ те малтанхи пекех сарăлса выртать. Вырăнвырăн çеç хăва пусма тытăннă, çавна май ку тăрăхра кăвакал вăйлă ĕрчесе кайнă. Ватă йăмра хытă тайăлнă, темиçе туратти çĕрех перĕнсе тăрать. Кăнтăрлахи шăрăх вăхăтра пăрусем канса выртма юратаççĕ кунта. Кăçал та çулла типĕ килчĕ. Мĕнле шăрăх пулсан та утăсăр аптрамасть ял халăхĕ, улăхра нӳрĕк пур та курăк лайăх ӳсет, пурин валли те çулса илме çитет. Çумăр çуманнипе пĕве типсех ларнăран вĕренре тăракан çамрăк пăрусене шыв ĕçтерме пахча хыçне кайрăм. Кунта кăна та мар, улăха кайсах вĕренленĕ иккен шăллăм.

Тĕлĕнмелле хитре çав пирĕн тăрăх. Е ялта тахçанах пулманнипе тунсăхласа çитнĕрен кăна çапла туйăнать-ши? Çӳлте, сăртра – Тете вăрманĕ, Сетьел тăвĕ çинче – Юманлăхпа Хурăнлăх. Яла килсе кĕнĕ çĕрте, сылтăмра, хыр вăрманĕ юлать. Паркăлтак теççĕ ăна. Аякра-аякра – кăн-кăвак тусем. Çумăр çуманнипе тусанлă пулин те, утса пынă май хир ирĕкĕ, уй анĕ, куç ытамĕнчи сенкер инçет кăмăла çĕклентерет. Хула тыткăнĕнчен хăтăлса килнипе кăна çыхăнман пулĕ ку. Авă хăмăл хушшинче уяр шăрчăкĕсем чăрăлтатаççĕ. Ыраш ăшĕнче кăн-кăвак утмăл турат чечекĕсем чӳхенсе лараççĕ. Пиçен шап-шурă çемçе мамăкне кăларма ĕлкĕрнĕ. Çул айккипе хупах сарăлса ӳсет. Улăхра вара çĕр тĕрлĕ чечек. Çавăнпа аякранах чăпаррăн курăнса ларать вăл. Малтанах асăрхамарăм та – çывăхрах шурă кĕпе тăхăннăскер утă çулать. Паккус вĕçне тухрĕ те ман еннелле çаврăнчĕ. Пăхса тăчĕ-тăчĕ те çавине хучĕ. Кунталла килет. Ман пăрусем шыв ĕçсе ячĕç те каялла сулхăна кĕрсе выртрĕç. «Çав йăмра айĕнчисем телейлĕ, мана кам шыв килсе ĕçтеретши?» – терĕ арçын çывхарнă май. Сасси тăрăх ĕçес килнипе ăшĕ хыпса çуннă теме çук-ха. Лăпкă та йăваш, хăлхана ачашлакан сасă. Чим, кам пулчĕ-ха ку? Ак, куççем хире-хирĕç пулчĕç те пăлханса, именсе кайнипе айккинелле тарчĕç. Ĕлĕкхиллех апла, халĕ те пытанма пăрахман. Мĕнле маларах палласа илеймерĕмха? Улшăнман та Сашук. Пăртак сарăлнă çеç. Хăмăр куçĕ каччă чухнехи пекех йăваш, ăшă кулли ытармалла мар...

Кĕтмен тĕл пулу пăлхантарса ячĕ. Пушă витре тытнă та пĕр вырăнта хускалмасăр тăратăп. Вун çичĕ çулта тейĕн, чĕре кăлт! кăлт! тапма пуçларĕ. Ытла та ăнсăртран-çке. Апла та пулать иккен. 20 çул иртсен... Чăн-чăн туйăмсем нихăçан та вилмеççĕ тесе ахальтен каламаççĕ иккен.

Сашук çурма пĕшкĕннĕ те çырла курăкĕ хушшинче пĕчченнĕн ларакан шурă салтак тӳмисем пуçтарать. Сисетĕп, вăл та пăлханать. Çавна май шӳтлекелесе илет. Куççем чунрине суйма памаççĕ çав. Вăрттăн пăхса илет те таçта аяккалла тинкеренçи пулать. Акă юнашарах эпир. Вăл манран пĕр утăмра çеç.

– Çак шур чечексем сан валли! – терĕ те çыхха алран тыттарса ăшшăн сĕртĕнчĕ.

Сăн-пит вут пек пĕçерсе кайрĕ. Хĕрпе каччă пек туслă та пулса курман-çке нихăçан, чунра вара ăшă, ăшă... Унран хаклă та çывăх çын çук та тейĕн çак çĕр çинче. Сашук хăй тĕллĕн калаçнă пек темиçе хут та ман ята асăнчĕ. Унтан ассăн сывласа илчĕ.

– Кала, чиперукăм, телейлĕ-и эсĕ?

– Телейлĕ, Сашук. Телейлĕ! Акă çак самантра никамран та телейлĕрех! Чунран калатăп, эсĕ çак çĕр çинче пурришĕн телейлĕ эпĕ!.. Çирĕм çул каяллахи чечек çыххипе вăраннă чи пĕрремĕш, чи таса туйăмсем паянхи кунччен те сӳнмен.

– Сан пĕлесчĕ, çак куна миçе çул кĕтнĕ эпĕ! – терĕ те Сашук, мана ăшшăн çупăрларĕ.

Эпир çерем çине пĕшкĕнсе лартăмăр.

– Ун чухне эсĕ ытла та çамрăкчĕ çав. Вун пиллĕкре кăна. Йăмăкпа иксĕр те тăмран пăтă пĕçерме пăрахманччĕ-ха, çапах та ман сансăр пуçне урăх никампа та туслă пулас килместчĕ. Каччă хĕре савнă пек те мар, тăванла юрататтăм сана. Пĕлместĕп мĕнле каламаллине те, пĕчĕкрен пĕлсе, курса ӳснипе-и, эсĕ маншăн хам йăмăк пекех хаклă пулнă. Салтакран таврăнсан ялта ытла тытăнса тăрас темерĕм, Чĕмпĕре вĕçтертĕм. Икĕ çултан килтĕм те – эсĕ те çук. Ӳссе çитĕннĕ, диплом илнĕ те тăван ялпа сыв пуллашнă.

Чунра ырă, ырă... Ăшă çил питрен, çӳçрен ачашшăн сĕртĕнет. Тĕл пулу ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе-ши, эпĕ пĕр сăмах та тавăрса калаймастăп. Пĕр хушă чĕнмесĕр ларнă хыççăн Сашук каллех шăплăха татрĕ.

– Çу кунĕнче нихăçан та ялта канса курман эпĕ. Халь вара ятарласа, хам шутран отпуск илсе çитрĕм. Сана курассишĕнех. Эсĕ ялта иккенне шăнкăравласа пĕлтерчĕç те.

– Вăрттăнлăх мар тăк, кам-ши вăл санпа маншăн питĕ хытă тăрăшаканни?

– Вăл пĕлтерĕшлех мар...

– Пĕччен ывăнтарчĕ, йăлăхтарчĕ мана. Чун сисет, шанать, паянтан кичем пурнăç вĕçленессĕн туйăнать. Ытла кĕтмен çĕртен тесе ан хирĕçле, ан сивле мана.

Алран-ал çавăтăнса улăх тăрăх васкамасăр ялалла утатпăр. Телейпе çиçекен куççем акă тинех пĕр-пĕринчен пытанма пăрахрĕç. Ĕненетĕп халь, чăн-чăн юрату вăхăта парăнмасть иккен. Икĕ теçетке ытла иртсе кайрĕ пулин те, чун тĕпĕнче вăрттăн, никама систермесĕр пурăнни тĕлĕнтерет те. Аллăмри шурă чечексем ăшă çил вĕрнĕ май черченнĕн чӳхенсе çулçисемпе шĕпĕлтетсе илеççĕ. Ахальтен мар: вĕсем те чĕрĕ-çке, вĕсем те пире юрату сунаççĕ. Ахăртнех, икĕ чун пĕрлешессине вĕсем те туяççĕ.

**Елена БАШКИРОВА.**



# Алла тытрáм балалáйка...



*Алла тытрăм балалайка,*
*Утрăм урам тăршшипе.*
*Урам тăршшĕ кĕске пулчĕ*
*Ман çунакан чĕрене.*

Юрăран.

Шурă Шупашкар хулинче пурăнатăп. Урам тăрăх хула илемĕпе киленсе савăнса утатăп. Пĕлĕтелле кармашакан çуртсен картишне кирлĕ мар ăпăр-тапăр япаласене пухмалли ешчĕксем лартнă. Хула тасалăхĕшĕн тăрăшаççĕ çав. Эпĕ те, ыттисем пекех, çӳп-çапа ирсерен кăларса пăрахатăп. Çынсем мĕн пăрахнине те пăхатăп. Кĕнекесем... Л.Толстой, В.Короленко, Н.Гоголь, А.Пушкин, С.Есенин... Паллах, эпĕ вĕсене пĕр сăмахсăрах пухатăп – кăларса пăрахнă кĕнекесене. Ман библиотека пуянлансах пырать...

Эх, аса илсен куçран куççуль шăпăртатать. Вăрçă çулĕсенче краççын çук пирки çутă çутсах кайман. Кĕнекесене уйăх çутипе вулаттăмăр. Питĕ вулас килнĕ пирĕн. Çулсем иртрĕç, эпир те ӳсрĕмĕр. Шкултан вĕренсе тухсан Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш педагогика институтĕнче ăс пухрăмăр. Института хирĕç кĕнеке лавкки пурччĕ. Халĕ те пур-ха вăл. Чупса кĕрсех çĕнĕ кĕнекесемпе паллашаттăмăр. Сутăн илме укçа çук студентăн. Пăхса савăнса тухаттăмăр лавккаран, çапах та кĕнекесем пире йывăрлăхсене чăтма, пурăнма хавхалантаратчĕç. Халĕ те асрах-ха пĕр вăхăтра вĕреннĕ паллă чăваш çыравçи Денис Гордеев калани. «Лавккана кĕреттĕм те кĕнеке çӳлĕкĕ патне пырса тăраттăм, пĕр-пĕр калава вуласа тухаттăмах. Кĕнекине илме укçа çук». Çапла, кĕнекине илме укçа çук...

Халĕ вара... Çак ешчĕкре выртакан кĕнекесен хуçисем леш тĕнчене ăсаннă пулĕ ĕнтĕ. Мăнукĕсен пурнăçĕ урăхла. Вĕсем евроюсав тăваççĕ, вĕсене кĕнекесем кирлĕ мар – кăларса пăрахаççĕ пулсан...

Пĕр ирхине гитара выртнине куртăм. Куçран куççуль шăпăртатрĕ. Каллех ачалăха путрăм. Таçта аякра хаяр вăрçă пырать. Купăс калакан вăйăçсем те унтах. Ялта купăс сасси илтĕнмест. Пĕрре, каçхине, колхоз уйĕнчен ĕçлесе ывăнса таврăннă хыççăн урама тухрăм. Мана хирĕç Зоя ятлă хитре хĕр утать, аллине балалайка тытнă та вăййа каять. Ялта ăна «Краснов Зои» теççĕ. Ун юратнă каччи вăрçăра.

«Алла тытрăм балалайка,
Утрăм урам тăршшипе.
Урам тăршшĕ кĕске пулчĕ
Ман çунакан чĕрене», – тесе вăйă тĕлĕнче чарăнчĕ хайхи. Каччисене кĕтекен хĕрсем ташлама тытăнчĕç. Зоя балалайкăпа ташă кĕвви калать. Çамрăк – çамрăках вĕт, хурлансан та юрлать, ташлать. Зоя ывăнчĕ пулас, Марье аппа балалайкăна алла тытрĕ. Унăн та Коля ятлă каччи вăрçăра. Вилнĕ хучĕ килнĕ теççĕ. Ĕненмеççĕ вăл хута çамрăк хĕрсем. Çапла, кашни каç ĕç хыççăн вăййа тухаççĕ. Балалайка каласа юрлаççĕ, ташлаççĕ.

Тепĕр самант аса килет. Вăрçă вăрăма пычĕ-çке. Кĕркунне уй-хирти тыр-пула пухса кĕртнĕ хыççăн бригадăна пухăнатчĕç: ĕç пĕтнине уявлама. Пирĕн аннепе пĕр тăван Улькка аппа аллине питлĕх тытнă, сылтăм аллинче – тимĕр кашăк. Улькка аппа тимĕр кашăкпа питлĕхе çапать, çапла майпа ташă кĕвви кăларать. Тăлăха юлнă хĕрарăмсем ташлаççĕ... Нумайăшĕн упăшкисем вăрçăра вилни çинчен хут килнĕ. Пурăнас пулать... Аттепе пĕр тăван Альтюк аппан сакăр ача. Икĕ ывăлĕ вăрçăра. Упăшки фронтра пуçне хунă. Хĕрĕсем гитара калаççĕ. Каçхине урама тухса лараççĕ те гитара каласа юрлаççĕ. Мĕнле майпа гитара пулнăши вĕсен? Чăваш халăхĕ юрра-ташша ăста. Шăпăр, сĕрме купăс, балалайка... კаланă, ташланă. Музыка инструменчĕсене лаша хĕлĕхĕнчен хăйсемех ăсталанă. Эх, илтесчĕ купăс сассине... Вăйăçсем вăрçăра, купăсĕсем хуçисене кĕтеççĕ. Çĕнтерчĕç хаяр тăшмана. Яла сывă юлнă салтаксем таврăнма тытăнчĕç. Çăварпа калакан нимĕç купăсĕ илсе килчĕ хăшĕ-пĕри. Каçсерен аранах ял урамĕнче купăс сасси янăрама тытăнчĕ. Ăçта унта нимĕç купăсĕн сасси? Хамăрăннине мĕн çиттĕр? Ялти нумай-нумай вăйăç киле таврăнаймарĕ вăрçă хирĕнчен. Ывăлĕсем ӳссе çитĕнчĕç те ашшĕсен вырăнне купăс калама тытăнчĕç. Балалайкăна та алран ямарĕç хĕрсем. Каçсерен купăс, балалайка, гитара сасси аякка-аякка саланатчĕ. Пирĕнпе кӳршĕллĕ Кĕрше ятлă вырăс ялĕ пур. Çав ял Кĕтнене юхса кĕрекен Вăта шывĕ хĕррипе вырнаçнă. Çав ялта та çамрăксем пулнах ĕнтĕ. Каçсерен вырăс ялĕн çамрăкĕсем юрланине шăп тăрсах итлеттĕмĕр. Кĕрлев çырми тăрăх вырăс юррисем пирĕн яла çитетчĕç. Вăрçă хыççăн та пурнăç çăмăл пулмарĕ. Балалайкăсем, купăссем, гитарăсем вăрçă хирне выртса юлнă çамрăксене кĕтме пăрахмарĕç. Пирĕн аттепе пĕр тăван Марье аппан виçĕ ывăлĕ Ваçлей, Иван тата Петĕр киле таврăнаймарĕç. Гитара калатчĕç, юрлатчĕç. Гитара, вĕсем каланă гитара, халĕ те пӳртре стена çумĕнче çакăнса тăрать. Кĕтет вăл хăйĕн хуçисем таврăнасса. Акă килсе кĕреççĕ те пӳрте, яланхи пекех гитара калама тытăнаççĕ. Марье аппапа йысна тирпейлĕ упратчĕç ывăлĕсем юратнă инструмента. Мĕн тăвас тетĕн... Ывăлĕсем, упăшкисем, савнисем таврăнасса кĕтетчĕç. Вĕсен кашни япалине тирпейлĕ тытса упрарĕç. Сывă юлнисем халĕ те купăс, балалайка, гитара каласа ташласа та юрласа ырăпа асăнаççĕ вĕсене. «Чĕррисен пурăнас пулать», – тетчĕ анне атте вăрçăран таврăнасса кĕтсе. Хăйĕн тантăшĕпе Кĕтерук аппапа çав тери хитре ташлатчĕç иккĕшĕ. Вĕсен ташшине «Урхамах ташши» тетчĕç. Кам вĕрентнĕ-ши вĕсене çапла хусканусем тума? Пулнах ĕнтĕ пĕлекенсем. Урăх эпĕ вĕсем пек ташлакансене курман. Хам та вĕренсе юлайман. Çав ташă хăйсемпе пĕрлех ăсанчĕ. Гитарăпа балалайка калакан та сахал. Купăс сасси тата... Ăна та сайра илтетĕн ялта халĕ. Пурнăç кустăрми кусать хăйне май. Пур-ха ялта купăс калакансем. Иртнĕ çул тăван яла Çĕнтерӳ кунне уявлама кайрăм. Урамра купăс сасси янăраса кайрĕ. Кӳршĕ Моисей Петрович калать иккен. Çамрăксем пухăннă. Федор Николаевич ывăлĕ Петĕр Воркутара ĕçлесе пурăнать. Çĕнтерӳ кунне ятарласа çĕнĕ купăс туянса килнĕ. Вĕсен тăванĕсем пурте купăс каланă. Çавсене асăнса килнĕ вăл. Мĕн тери хаваслă урамра купăс, балалайка, гитара сасси илтĕнсен... Пурнăç улшăнать çав. Кăларса пăрахнă япаласем çине хурланса пăхатăп. Асăнмалăх упрасчĕ вĕсене.

**Роза ПЕТРОВА-АХТИМИРОВА.**
Шупашкар хули.

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

***Валентина ХРИСТОФОРОВА-ВИНОГРАДОВА***

### Тупăп, тен, телейĕме...

Шухăш, шухăш ман пуçра,
Темĕн явăнать куçра:
Ах, мĕнле пурăнмалла,
Ăçталла-ши каймалла?

Эп пыратăп çулпала,
Тăрăшсах ман утмалла.
Мĕн кĕтет-ши малашне?
Кам-ши парĕ хуравне?

Кайăксем карти-карти,
Сасси уçă, какăлти...
Килнĕ ăшă кăнтăртан,
Савăнаççĕ кăмăлтан.

Эх, пуласчĕ кайăк пек,
Тӳпере вĕçесчĕ тек,
Хăнăхсан çапла вĕçме
Тупăп, тен, телейĕме.

### Ĕмĕр асăмра

***Упăшкана Геннадий Христофорова асăнса***

Вăрăм, анлă сукмакпа
Чĕрĕк ĕмĕр каялла
Утнăччĕ эпир санпа:
Алла аллăн çавтăнса.

Халĕ те куç умĕнче:
Хурăнсем ик енĕпе.
Эх, илемлĕ çут тĕнче
Шăпчăк савăк юррипе!

Ĕмĕр манăн асăмра
Сан куçу: кăвак-сенкер,
Ах, анчах, малашлăхра
Курăнмастчĕ-çке синкер.

Кайрăн эсĕ уйрăлса
Çакă çутă тĕнчерен.
Йĕчĕ чунăм татăлса,
Пурнăç улшăнчĕ тĕпрен.

Вăхăт чупрĕ малалла
Темĕн чухлĕ унтанпа.
Иккĕн утнă çулпала
Халь çӳретĕп мăнукпа.

### Тăван кил

Атте-анне пӳртне-çуртне
Кайса кĕрсе курасчĕ.
Пухса мĕн пур тăвансене
Ыр-ăшшăн калаçасчĕ.

Ах, çитрĕм васкаса. Чĕре
Салхуллă, ыратуллă.
Тухмасть халь тĕтĕм мăрьерен,
Унччен палкатчĕ вăйлă.

Пӳрте кĕресшĕнччĕ – çăра
Сивлеккĕн пăлтăртатрĕ.
Пусать-пусать тем кăкăра,
Куççуль те шăпăртатрĕ.

Çапла тĕл пултăм килпеле,
Ăшра чăтма çук тунсăх.
Атте-анне пур чух епле
Кĕрлетчĕ çут ачалăх.

Эпир упранă ватлăха,
Татулăх хисепреччĕ.
Чыс виттĕр пирĕн ватлăха,
Çула унпах вĕçлесчĕ...

### Парне

Кун паян тӳлек те шăрăх,
Эп пыратăп улăх тăрăх.
Чечексен ытамĕнче
Мĕн тери хитре тĕнче!

Мĕн тĕрли чечек çук пулĕ,
Татнăçемĕн кăмăл тулчĕ.
Чечек капăр çыххине
Парнелесшĕн аннене.

Аттене те, çук, манмастăп,
Ним памасăр хăвармастăп.
Çĕрĕпех сăмса тутри
Эп тĕрлерĕм ун валли.

Чечекпе сăмса тутри –
Хĕр пĕрчин уяв парни.

## КИВЕЛМЕН ЮРĂСЕМ

### Авланнă ар вар тĕпĕнче...

**/«А я люблю женатого...»/**

***Авторĕсем Кирилл Молчанов, Николай Доризо***

Ялтраççĕ ылтăн çутăсем
Сар ту хула урамĕнче.
Питех нумай яш каччăсем,
Авланнă ар – вар тĕпĕнче.

Çемье вăл çавăрчĕ пит ир,
Халь тин мĕскер тăвайăпăр?
Сăмах татман унпа эпир,
Чĕрем сурать пĕр айăпсăр.

Унпа хăратăп тĕл пулма,
Тарас килет курсассăн та.
Ăçта хурас-ха пуçăма
Чун вăрансассăн çавăнта.

Ăна курма эп тивĕç мар,
Килĕштерсе пăрахĕ те...
Юратăва пĕччен хăвар,
Пĕрле чух хирĕçлеймĕп те.

Ялтраççĕ ылтăн çутăсем
Сар ту хула урамĕнче.
Питех нумай яш каччăсем,
Авланнă ар – вар тĕпĕнче.

### Сана нихăçан та манаймăп...

**«Юнонăпа Авось» оперăри романс**

***Авторĕсем А.Рыбников, А.Вознесенский***

Эс мана шуçăмлах ир вăратăн,
Ăсатма чăлха вĕççĕн тухатăн.
Эс мана нихăçан та манаймăн,
Эс мана нихăçан та кураймăн.

Эп сана шăнасран, ан ту айăп,
Тур çырлах, теейсе пуçа тайăп.
Эп сана нихăçан та манаймăп,
Эп сана нихăçан та кураймăп.

Çырла пек куçусем йĕпенеççĕ,
Хупăнмасăр, сив çил вĕрнĕ майăн.
Каялла çаврăнни кăлăх, теççĕ,
Эп сана нихăçан та кураймăп.

Пĕр-ик сăмах каласа ăсанатăп,
Шăпана хирĕçле мĕн тăвайăп:
Эп сана нихăçан та манаймăп,
Эп сана нихăçан та кураймăп.

**Анатолий ЮМАН куçарнă.**

ÇĂЛТĂР ÇУМĂРĔ

# «Чапа пула пуç çаврăнмасть»



**Телекурав çĕнĕлĕхсемпе савăнтарать. Иртнĕ çул, сăмахран, "Орел тата решка" кăларăм /"Пятница!" канал/ чăн-чăн хита çаврăнчĕ темелле. Андрей Бедняков телеертӳçĕпе пĕрле килтен тухмасăрах тĕнчен тĕрлĕ кĕтесне çитсе курма май пулчĕ. Украина телеçĕнĕсем темиçе çул ӳкерекен трэвел-шоу Раççей кураканне те тыткăнларĕ. Проект шухăшĕ питĕ ансат: телеертӳçĕсем – арçынпа хĕрарăм – кашни канмалли кун тĕнчен пĕр-пĕр кĕтесне çул тытаççĕ. Вĕсенчен пĕрин икĕ кун – шăмат кунпа вырсарни кун – 100 долларпа пурăнма тивет, теприн аллине банк ылтăн картти лекет, çавăнпа вăл укса-тенке шутламасăрах тăкаклама пултарать. Шăпа вăййине – кам чухăн, кам çĕрме пуян – вак укса татса парать. Ăна çӳлелле ывăтса тытаççĕ, хăш енĕпе ӳкнине пăхаççĕ. Проектра чи нумай тытăнса тăраканни – Андрей Бедняков.**

### "Манран ача çуратасшăн"

– Андрей, сирĕн пек ĕç çинчен ĕмĕтленме çеç пулать! Ку проекта мĕнле лекнĕ эсир?

– Кастинг çинчен пĕрремĕш ĕçтешĕмрен Жанна Бадоеваран пĕлтĕм. Унпа вара пĕлĕшĕмĕн клип презентацийĕнче паллашнăччĕ. Эпĕ, тĕрĕссипе, телекуравра пĕрремĕш çул кăна мар. Калăпăр, "Большая разница" кăларăмăн Украина версийĕнче актер пек ӳкерĕнетĕп. Тахçантахçан хайхи Жаннăн мăшăрĕ, паллă режиссер тата клипмейкер Алан Бадоев, тĕлĕшпе пародисем те хатĕрленĕччĕ. Вĕсемпе эпир социаллă сетьсенче те хутшăнаттăмăр. Çапла вара кастинга хутшăнса пăхма тĕв турăм. Эпĕ хамăн вăя шанакан çын. Конкуренци питĕ пысăк пулчĕ. Унта хутшăннисенчен хăшĕ-пĕри, сăмахран, Иван Дорн юрăç, каярахпа суперчаплă çынсем пулса тăчĕç. Манăн вĕсене çитме инçеха.

– Кăна якăлтатса калатăр-и?

– Çук. Мана Украинăра, чăн та, пĕлеççĕ, анчах та пирĕн куракансем сăпайлă. Раççейре вара, суймастăп, утма та памастчĕç – ыталаççĕ, чуп тăваççĕ... Çакна ăнланма пулатьтĕр: сирĕн патра пирĕн кăларăма çамрăксен каналĕпе кăтартаççĕ, пирĕн вара – пĕрремĕш кнопкăллипе. Аудитори расна пулни çапла витĕм кӳрет-тĕр. Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха: калăпăр, Киеври метрора мана 60 çулсенчи хĕрарăм курать те чупса пырса мăйран çакăнать: "Бедняков! Манăн санран ача çуратас килет!! Чăн та, нумаях пулмасть саккăрти хĕр пĕрчи курчĕ те: "Андрей, ку эсĕ-и? Пипец!" – терĕ. Эпĕ чутах кайса ӳкеттĕм: "Аннӳ умĕнче усал сăмах калама мĕнле хăятăн эсĕ?" – "Ку анне мар, аппа", – кăвак куçне мăчлаттармарĕ те вăл...

– Эсир ун çулĕнче мĕнле пулнă?

– Темĕн те пĕлес килетчĕ. Мариупольте çитĕннĕ эпĕ. Шалти ĕçсен министерствин Харьковри университетĕнче вĕрентĕм. Шкулта ют чĕлхесене шĕкĕлчеме килĕштереттĕм пулин те шăпа право хуралне илсе çитерчĕ. Ильич ячĕллĕ заводра та ĕçленĕ эпĕ. Ун чухне КВН "Ильича-ча" командине хутшăнаттăм. Каярахпа мана Украина клубĕн аслă лигине чĕнсе илчĕç. Унта вара эпĕ "чĕрĕ" Александр Маслякова хăйне куртăм!

### Пĕрремĕш юрату

– Хĕрсемпе хутшăнусем мĕнле аталанса пыраççĕ?

– Пĕрремĕш юрату... икĕ кассетăллă магнитофонпа çыхăннă. Ну, хĕрсем те килĕшетчĕç паллах. Ун чухне вĕсем анкета тытса пырасси модăна кĕнĕччĕ. Эпир вара çавсене вăрласа вулама тăрăшаттăмăр. Ытларах "Сана каччăсенчен хăшĕ килĕшет" ыйту кăсăклантаратчĕ. Çак информаци мана пĕрремĕш чуп тăву парнелерĕ. Каярахпа чиперуксенчен пĕри арçын пулса тăма пулăшрĕ. Чăн та, эпир унпа вăрах тĕл пулнăччĕ.

– Хĕрсем умĕнче паттăрлăх кăтартма хăтланнă-и эсир?

– Пионерлагерьте каçхине иккĕмĕш хутран сиксе чечек клумби патне чупаттăмăр. Алăра тăр чĕрĕк пулнине пăхмасăрах кĕл чечек çыххине тата сăвва кӳршĕ корпусри ăш çунтармăш валли хатĕрлеттĕм.

– Мĕнле хĕрсем килĕшеççĕ вара сире?

– 64 сантиметр çӳллĕш, тути – силикон, кăкăрĕсенчен пĕри пысăк, теприн пĕчĕк... Чăмăркка, искусствăллă вăрăм чĕрнеллĕскер. Ку – манăн идеал! Шӳтлетĕп паллах. Эпĕ çемçе чунлă çын, сăмаха питĕ çывăха илетĕп. Çавăнпа хĕрсене хам пеккисене суйлатăп. Эпĕ, сăмахран, "Титаника" темиçе хут пăхсан та макăрма пултаратăп. Çамрăкрах чухне пикесем те манăн куçран куççуль кăларатчĕç. Киле таврăнаттăм та хайхи магнитофона "Backstreet boys" кассетине лартса, хам юрланă пек туйса куççульпе çăвăнаттăм.

### Хусах. Хальлĕхе...

– Паллă чиперуксем çунтарса курнă-и сирĕн чуна? Калăпăр, Вера Брежнева?

– Вера – çук! Вăхăта унпа ирттерме май пулсан япăх марччĕ-ха та... Вау!

– Эсир пĕр-пĕр пикепе паллашас тĕллевпе хăвăрăн чаппа усă курманнине ĕненес килмест.

– Мана кирлĕ мар ку. Манăн савни пур – эпир ултă çул ĕнтĕ Настя Короткаяпа тĕл пулатпăр. Вăл та "Орел тата решка" проекта ертӳçĕ пулса хутшăнăччĕ. МИХсем пире тахçанах пĕрлештернĕ ĕнтĕ – анчах та хальлĕхе ку – тĕрĕс информаци мар.

/"Экспресс-газета"/.



АХ, АНЧАХ...

# Çĕр-шыв ертӳçи пулма... хăрушă

**45 çул каялла, 1969 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнче, совет çарĕн кĕçĕн лейтенанчĕ Виктор Ильин Леонид Брежнева тапăннă. Тискер ĕçе, телее, лайăх шухăшласа планламан, çавăнпа ăнăçупа вĕçленмен вăл. Генсек чĕрех юлнă, лейтенант вара решетке хыçĕнче çирĕм пĕр çул ирттернĕ. Хăрушсăрлăх органĕсем яланах сыхă пулнă, çапах та патшалăх ертӳçисене тапăнсах тăнă. Çав шутра – Сталина та. СССР вăхăтĕнче çакăн пирки каласма юраман. Çакă кăна...**

### Леонид Брежнев

1969 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ пăтăрмах историе чи сĕмсĕр усал ĕç пек кĕрсе юлнă – çав кун Леонид Ильич Брежнева тапăннă. 21 çулти офицер малараx чаçрен тарнă, икĕ пистолет вăрланă. Каç еннелле вăл Мускава çитнĕ, куккăшĕ патĕнче чарăннă. Милицие ĕçлекен тăванне тĕлĕнтернĕ-ха хăна. Ильин вара ăна лăплантарнă – тĕп хулана космонавтсене кĕтсе илнине курма пынă-мĕн... Кăрлачăн 22-мĕшĕнче Кремльте шăпах "Союз-4" тата "Союз-5" экипажсене чыслама хатĕрленнĕ. Ирхине Ильин куккăшĕн формине тăхăнса тарнă, Кремле çул тытнă. Паллах, çи-пуç унăн умĕнчи çула уçса пынă. Хайхискер ытти милиционерсен ушкăнне тăнă, кортежа кĕтме пуçланă. Пĕрремĕш машинăна ирттерсе янă, иккĕмĕшне вара пеме пуçланă. Унта космонавтсем – Береговой, Леонов, Николаев, Николаева-Терешкова – ларса пынине чухлама та пултарайман, паллах, вăл. Вун пĕр хутчен персе Ильин водителе вĕлернĕ, хурал офицерĕсене амантнă. Брежнев вара тапăну пирки каярахпа кăна пĕлнĕ – унăн машини ыттисемпе пĕрле пыман та иккен, вĕсем, сиснĕ пекех, маршрута улăштарнă.

### Иосиф Сталин

1933 çулта Сталин Грузире бомба çурăлнине пула чутах вилмен. Инкекрен Грузин парти тĕп комитечĕн пĕрремĕш секретарĕн Лаврентий Берийĕн сисчĕвлĕхĕ сыхласа хăварнă. Лашупсе юхан шывĕ урлă каçмалли кĕпер айне сирпĕнекен хатĕр вырнаçтарнă-мĕн. Унталла çывхарса пынăçемĕн Сталина урăх машинăна куçса лармашкăн сĕннĕ. Иосиф Виссарионович каланине итленĕ. Вăл малтан ларса пынă машина вара кĕпер çине кĕрсен сирпĕннĕ те тĕпсĕр çырмана вăркăннă.

1935 çулхине Сталин амăшĕ патне хăнана пынă. Унăн тăван кĕтесре канас килнĕ. Анчах та ĕмĕтне пурнăça кĕртме май килмен, питĕ хăвăрттăн çула пуçтарăнмалла килсе тухнă – хурал Грузи опытлă большевикĕсем ертӳçе хирĕç кавар йĕркеленине пĕлнĕ. Грузинсен шухăшĕпе, вĕсен ентешĕ Ленин ĕçне сутнă иккен. Çавăнпа ăна мĕнле май килет – хăвăртрах вĕлерме тăрăшмалла тесе каварлашнă...

1939 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче çĕр-шыв ертӳçи тĕлĕшпе каллех кавар йĕркеленĕ – Сталина Мавзолея сирпĕтсе вĕлерме палăртнă. Çак ĕçе Германирен килсе çитнĕ диверсантсене пурнăçлама шаннă. Анчах та СССРа килсе çитнĕ террористсем те палăртнине пурнăçлайман. Вĕсен шăпи паян та паллă мар.

1942-1944 çулсенче фашист диверсанчĕсем Сталина пĕтермелли темĕн тĕрлĕ план та хатĕрленĕ, вĕсене пурнăçа кĕртме те хăтланса пăхнă. Анчах та ăнăçу вĕсен енче пачах пулман.

1943 çулхине нимĕç террорисчĕ Отто Скорцени союзла патшалăхсен пуçлăхĕсем Тегеранра тĕл пулнă чухне Сталинпа Черчиле – вĕлерме, Рузвельта вăрласа тухма палăртнă. Операцие "Большой прыжок" тесе ят панă. Тен, хальхинче вĕсен усал шухăшĕ пурнăça кĕме те пултарнă, анчах каллех совет хăрушсăрлăх органĕсем сыхă пулни чăрмантарнă.

### Никита Хрущев

Ăна вĕлерме икĕ хутчен тапăннă, анчах та пăшалтан персе мар, икĕ хутĕнче те сирпĕтсе яма тăнă.

1956 çулхине Хрущев туслă çул çӳревпе Аслă Британие çитнĕ. Ертӳçĕ "Орджоникидзе" крейсер çинче каннă. Пĕр кун карапран инçех те мар "паллă мар япала" асăрханă. Хайхи "япала"... бомба иккен! Каярахпа çакна тĕпчесе палăртма май килнĕ. Диверсие Британи çар ишевçи хатĕрленĕ. Хаçатçăсем ăна шӳтлесе "шыв айĕпе ишме юратакан" тесе ят панă.

1960 çулта Грузире вырăнти националистсем Хрущев кортежĕ çине хăйсем хатĕрленĕ сирпĕтекен япаласем ывăтма хатĕрленнĕ. Кавара çĕр-шыв ертӳçи Грузие çула тухиччен... çур çул /!/ маларах тупса палăртнă. Террористсем пирки патшалăх хăрушсăрлăх органĕсене "ырă сунакан" шăнкăравласа систернĕ.

### Юрий Андропов

1983 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕнче Андропова СССР шалти ĕçсен министрĕн арăмĕ Светлана Щелокова тапăннă. Мускаври сас-хура питĕ хăвăрт сарăлнă – Щелоков арăмĕ Андропова лифтра пистолетран персе амантнă, кайран хăй çине алă хунă. Сăлтавĕ те паллă – хĕрарăм çĕр-шыв ертӳçине мăшăрĕшĕн Николайшăн тавăрма тĕв тунă пулĕ теççĕ. ШĔМ ертӳçине çакăнчен кăшт маларах нумай-нумай усал ĕçшĕн должноçрен хăтарнă иккен. Хăйне ытла та çирĕп айăпласран хăраса арçын перĕнсе вилнĕ. Чăн та, ку историе пурте ĕненмеççĕ – Щелокова Андропова тапăнман текен те пур: хĕрарăм хăйĕн дачинче упăшкин пистолетĕнчен перĕнсе вилнĕ имĕш.

### Михаил Горбачев

1990 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче СССР юлашки ертӳçи чутах Александр Анатольевич Шмонов аллинчен вилмен. Октябрь революцийĕн кунне уявланă май вăл демонстрацире Горбачева пăшалтан пеме тăнă. Демонстрантсен ушкăнĕ Мавзолейпе танлашсан Шмонов икĕ хутчен кĕрслеттернĕ. Анчах та – ăнăçсăр. Горбачева кăна мар, никама та лектереймен. Усал ĕçе вĕçлеме Андрей Мыльников милиционер йăрăлăхĕ чăрмантарнă – вăл пăшала ярса илме ĕлкĕрнĕ, çапла майпа Раççей историне урăх йĕрпе чупма паман. Пĕр шухăшласан, Михаил Горбачев çавăн чухне куçне ĕмĕрлĕхе хупнă тăк паян çĕр-шыв мĕнле çулпа аталанĕччĕ-ши?

/"Вести.Ru"/.



РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРŸСЕМ

## Саламлатпăр

***Хаклă Агреппина Максимовна!***

*Эпир сире 60 çул тултарнă ятпа, сумлă юбилейпе чунчĕререн, ăшă кăмăлтан саламлатпăр.*



*20 çул ытла эсир Федераци почта çыхăнăвĕн управленийĕн хаçат-журнал çырăнтаракан пайне ертсе пыратăр.*

*Ĕçре сире вай-хăват, çĕнĕ çитĕнŷсем тума сунатпăр. Иксĕлми телей, хурçă пек çирĕп сывлăх, килĕшŷ, тулăх та вăрăм кун-çул пултăр сирĕн. Кĕрекĕр çăкăр-тăвартан, тăвансенчен, тус-юлташран ан татăлтăр.*

*Хăвăра кăмăллакан, юратакан, ăнланакан çынсемпе нумай-нумай çул ĕçлеме сунатпăр.*

***Сире хисеплесе, кăмăлласа хаçат-журнал çырăнтаракан пай ĕçченĕсем.***

**Упăшкапа тавлашрăмăр – эпĕ пилĕк килограмм нарарлансан вăл мана ылтăн парнелет. Тăрăшсах диета суйларăм. Пĕр кун чăтрăм, иккĕ... Виççĕмĕш кун тĕкĕр умне пырса пăхрăм та... Темĕн, мана ылтăн каймасть те пулĕ...**



* * *

**Пĕрисен хваттерĕнче çĕрле телефон шăнкăртатать. Налук инспекцийĕнчен иккен.**

**– Каçарăр, эпир сирĕн лăпкă ыйхăшăн пăшăрханса кăна шăнкăравлатпăр...**

* * *

**Кашни арçыннăн çакна пĕлмелле:**

**● Апат тутлă пиçнĕ тĕк шăпăрт лармалла мар.**

**● Апат тутлă мар тăк шăпăрт кăна çимелле.**

* * *

**Арăмĕ – упăшкине:**

**– Çамрăк чухне эсĕ мана кунне пĕр самант кăна курсан та хăвна телейлĕ туяттăн...**

**– Халĕ те çавах... – мăкăртатать арçын.**

* * *

**– Эсир çак вырăнта пĕр арçынна асăрхамарăр-и? Манăн упăшка вăл... Пирĕн сехет каялла шăп çак вырăнта тĕл пулмаллаччĕ...**

**– Мĕнлерех вара вăл?**

**– Ман шухăшпа – рак пек хĕрлĕ: тарăхнипе...**

* * *

**Ĕнер полицин районти уйрăмĕнче Петров гражданина тытса чарнă, вăл пĕтĕм айăпа йышăннă. Айăпсен списокне полици ыран палăртать.**

* * *

**Тухтăр – чирлине:**

**– Сирĕн тăтăшрах çăвăнас пулать.**

**– Анчах та эпĕ капла та кашни кунах ваннăра çăвăнатăп!!!**

**– Апла тăк шывне тăтăшрах улăштармалла!**

* * *

**– Эсĕ упăшкун нускине хаттер тăрăх пуçтарса çŷресе çума, эрне кун ăна, ура çинче аран-аран тăраканскерне, çĕр варринче кĕтсе илме, ăна юлташĕсемпе пулла çĕр каçмаллах ăсатма, унпа пĕрле футбол пăхма, унăн юлташĕсене чăтма, хуçалăха пĕччене сĕтĕрме килĕшетĕн-и?**

**– Эсĕ пĕтĕм шалăвна арăмна пама, паллă пĕтĕм куна асра тытма, ăна тăтăшах чечек тата хаклă ытти япала парнелеме, хунямуна юратма, эрех-сăраран, ют майрасенчен сивĕнме, арçын тивĕçне кашни каçах пурнăçлама килĕшетĕн-и?**

**Вăт çакăн пек ыйтусем памалла ЗАГСра. Тăраççĕ унсăрăн: "Ырлăхра та, хурлăхра та..."**

* * *

**Диетолог патне арçын пынă.**

**– Пылак юрататăр-и? – ыйтать тухтăр.**

**– Çук.**

**– Тен, кукăль-çăмах килĕштеретĕр?**

**– Çук.**

**– Ну, мĕн те пулин çиес килет вĕт-ха сирĕн çапах та!**

**– Баклажан!**

**– Ну, вăт! Калатăп вĕт-ха! Шăпах ăна çиме юрамасть те сирĕн!!!**

И-ХИ-ХИК

## ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**16.Сетку-рабицу** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**24.Грабли, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.**Новинки от **КЛОПОВ, МУРАВЬЕВ и ТАРАКАНОВ.** Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

## ПРОДАЮ

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**68.Кирпич, керамблоки** всех видов. Доставка. Т. 8 /8352/ 213680.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ:** пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**719.Блоки керамзитобетонные** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Т. 8-917-677-68-46.

**842.Срубы для бани.** Т. 372874.

## УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**257.Наркология.** Т. 8-927-667-33-68. Лиц. 5001001230 от 8.06. 2007г.
*Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**843.Бычков,** коров, **тёлок,** овец, **свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

# Кăшарни каçĕ

Вĕçĕ-хĕррисĕр çăлтăр тŷпере. Уяр каç... Кăшарни сиввине пăхмасăр чун юхан шыв хĕррине чĕнет. Асран каймн савнă ялăм – Каçал тăрăхĕнчи Хирти Ĕнел – илемĕпе киленсе, çĕнĕ çуртсене сăнаса утатăп. Ачалăхпа çамрăклăх тĕнчине таврăннăнах туйăнать. Умра – Хирти Сĕнтĕрпе Хирти Ĕнел хушшипе юхса иртекен Ерыкла юхан шывĕ. Кунсерен шкула çак сукмакпа утнă, сăртран та çăкăнтах çунашкапа ярăннă. Нимĕн те улшăнман темелле...

Ял халăхĕ йышлă пухăннă юхан шыв хĕррине. Ваттисем те, ача-пăча та хĕвĕшет кăна – пурте сăмсана чĕпĕтекен сивĕрен хăрамасăрах шыва чăмса тухас тесе килнĕ. Кăшарни шывĕ сиплĕ-çке, çакна асра тытса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ уява пирĕн ялта. Кăшарнире шыва кĕни сывлăха çирĕплетет, вăй-хал хушать, чир-чĕртен сывалма пулăшать теççĕ. Кăвайт çинче чей вĕретеççĕ, пулă шŷрпи пĕçереççĕ. Киле никам та васкамасть.

**Лидия ИЗЕКЕЕВА.**





**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ**

«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

**Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ**

**Редактор – М.М.ИЛЬИНА**

**Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА**

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службി 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.**

**Çырăнмалли индекс: 11515**

**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тŷлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшŷллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 9061. Заказ 230.